Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТАБЕР 18 ЫТЛАРИКУН 241 (5054) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци çекретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Промышлĕннăçăн тăваттăмĕш квартăлти задачисем

Сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕн 4-мĕш квартăлĕ пуçланчĕ. Çак квартăл çулталăкри чи ответлă тапхăр пулса тăрать. Йулашки квартăлри ĕçсем халăх хуçалăхĕн 1938 çулти планне ăнăçлăн вĕçлесе çитерессине çеç мар, çитес çулта тухăçлăн ĕçлесе тата та пысăкрах ÿсĕмсем тăвассине те татса параççĕ.

Кăçалхи çулăн иртнĕ квартăлĕсем республика промышлĕннăçĕ, йалхуçалăхĕ тата халăх хуçалăхĕн ытти отрăçлисем те çĕнĕ ÿсĕмсем тунипе палăрса тăраççĕ. Стаханăвла йухăма сарса пырса, сатăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерсе пырса, çулталăкри плана срукчен тултарнă предприйатисем те сахал мар. Деткомиссийн Шупашкарти хапрăкĕ çулталăк планне виçĕ квартăл хушшинче 111 процент тултарнă. Çавăн пекех Улатăрти 7—5-мĕш номĕрлĕ хăма савăчĕсем хăйсен çулталăкри планĕсене 9 уйăх хушшинчех чылай иртерсе пурнăçа кĕртнĕ.

Виçĕ квартăл планне ăнăçлăн тултарнă предприйатисемпе республикăре вуншарăн шутланаççĕ. Çавна май пур халăх комиссариачĕсен промышлĕннăçĕсем тăрăх та ĕç тухăçлăхĕ, ĕç укçи хисепĕ ÿссĕх пырать.

Кăçал тунă ÿсĕмсенчен чи паллă вăл—промышлĕннăçа, транспăрта, йалхуçалăхне тата культура строительствине анлăн вăйлатса пыма кирлĕ татăклă ĕçсене тума тытăнни пулать. Кăçал Шупашкарта çĕнĕрен пысăк предприйатисем тума тытăннă, коммунальна çуртйĕр строительстви анлăн сарăлса пырать. Халĕ ĕçлекен предприйатисене йусаса аслатасси анлăн пулса пырать.

Анчах тунă ÿсĕмсем чылай отрăçлĕсем, предприйатисем начар ĕçленине нихăш йенчен те витме пултараймаççĕ. ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ республика промышлĕннăçĕ чылай тĕлĕшпе йулса пынине палăртса хăварчĕ. Промышлĕннăç планне тултара çĕрте пысăк вырăн йышанакан Куславкка, Çĕмĕрле комбиначĕсем, Канашри вакунсем йусакан савăт çаплах начар ĕçлеççĕ. Вакунсем йусакан савăт 9 уйăхри плана 62,6 процент çеç тултарнă. Вăрмарти „Спортинвентарь", Шупашкарти макарон хапрăкĕсем, Улатăрти пăравуссем йусакан савăт та нумайăх мала кайман. Çавăн пекех вырăнти тата апат-çимĕç промышлĕннăçĕсем те хăйсен планне тултарса пыраймаççĕ. Вырăнти промышлĕннăç Халăх Комиссариачĕ виçĕ квартăл хушшинче государствăна 5,5 пин кирпĕч парса çитеймен. Промысла кооперацийĕсен йенĕпе те туса çитереймен ĕçсем чылай-ха.

Уйрăмах вăрман хатĕрлев тата строительствăн планĕсене тултарасси йулса пыни хытăн пăхтарать. Октăберĕн малтанхи вуна кунĕ хушшинче квартăл планне: хатĕрлессипе—5,8 процент, турттарассипе—6,3 процент çеç тултарнă. Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви вăрăма йулчĕ. Унта халĕ те ĕçсем сÿрĕккĕн пыраççĕ. Коммунальна çуртйĕр строительстви планне тултарассинче питĕ те пысăк ситменлĕхсем пур. Ĕçсем çакăн пек йулса пыни — халăх тăшманĕсен сатăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтемпех пĕтерменнинчен килнĕ.

Чылай отрăçлĕсем, предприйатисем йулса пынине 4-мĕш квартăлта пĕтĕмпех пĕтермеле. Пайанхи ответлă задача вăл—кашни йулса пыракан участксене малтисемпе танлаштарса, çулталăкри плана ăнăçлăн вĕçлесе çитермелле тăвасси. Республикăри государство промышлĕннăçĕн 4-мĕш квартăлти планĕ 3-мĕш квартăлтинчен 21,5 процент ытларах шутланать. Уйрăммăн илсен, çак квартăлта РСФСР тата Чăваш АССР-не пăхăнакан государства промышлĕннăçĕн 7490,2 пин тенкĕлĕх, промысла кооперацисен—15100 пин тенкĕлĕх продукци кăлармала. Продукци хакне йÿнетес, пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тумала.

„Конференци парти, совет, профсойуз организацийĕсене промышлĕннăçра тата транспăртра сатăрлăх йулашкисене пĕтерес тата тăшманла тымарсене тăпăлтарса кăларас тĕлĕшпе татăклăн ĕçлеме пуçăнма, кашни предприйати производства программисене хисеп тата пахалăхĕ йенĕпе те пĕтĕмпех тултармала тума хушать" (Облăçри XIX-мĕш партконференци йышăннă резолюцирен).

Плана вăхăтра тата пысăк пахалăхпа тултарма пирĕн мĕн кирлисем пурте çитĕнĕклĕ. Предприйатисенче çĕнĕ, вăйлă техникăлă машинисем ĕçлеççĕ. Йĕртсе пырас ĕçе килнĕ çĕнĕ çынсем ĕçĕн техникине алла илсе, пысăк ÿсĕмсем тăвассине организацилесе пыраççĕ.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнине хатĕрленнĕ тата Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăрту анлăн сарăлса пынă вăхăтра, кăçалхи 4-мĕш квартăл пуçланчĕ. Ăмăртăва кунсерен пиншер рабочисем хутшăнаççĕ. Ку ăмăртура уйрăм стаханăвĕçсемпе ударниксем çеç мар, бригадăсем, цехсем, савăтсем пысăк тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕç. Партипе профсойуз организацийĕсен, хуçалăх руководителĕсен уйав умĕнхи ăмăртăва пĕтĕм рабочисене йавăçтарса, ăна стаханăвла йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕ тăвăса хумала. Стаханăвĕçсен йышне куллен ÿстерсе пырса, стаханăвла коллективсем патне!—çакнашкал пулмала Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртун тĕп лозунгĕ.

4-мĕш квартăлта хĕллене пур йенчен те хатĕрленес тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлесе пымала. Халех пĕтĕм цехсене, транспăрт хатĕрĕсене, йалпамăн тата культура çурчĕсене хĕллене хатĕрлесе çитермеле.

ПСК(б) Парти Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ промышлĕннăçпа транспăрт ĕçне малашне çĕклесе пыма татăклă çул кăтартса пачĕ.

Тăшмансене, вĕсен сатăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерсе пырасси, рабочисен хушшинче партилĕ-массăлă ĕçе, стаханăвла йухăма нихçанхинчен ытла вăйлатса йарасси, большевисла вĕренĕве алла илесси —партипе комсомол тата профсойузпа хуçалăх организацийĕсен умĕнче тăракан тĕп задачĕсем пулмалла. Çаксене пурнăçа пырса, кăçалхи çулăн йулашки квартăлĕнчи халăх хуçалăх планне ăнăçлăн тултармала.

ПСК(б)П Обкомĕ ăнлантарса пани

ПСК(б)П Обкомĕ çапла ăнлантарса парать: ПСК(б)П Чăваш Облăç организацин XIX-мĕш конференцийĕ ПСК(б)П Облăç Комитечĕн отчочĕ тăрăх йышăннă резолюцийĕ, „Партилĕ-политикăлă ĕçсен йенĕпе" пайăн 2-мĕш пунктĕнче виççĕмĕш обзаца çакăн пек тĕрĕс мар тата ăнăн çырнă: „ПСК(б)П Обкомĕ, Шупашкар хула комитечĕ, райкомсем ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ отчотла суйлав пухăвĕсенче парторгăнсен ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хакланă организацисен отчочĕсене пĕр уйăх хушши срукра итлесси çинчен панă пăха кăтартăва пурнăçа кĕртменнине палăртса, конференци Обкома, Шупашкар хула комитетне, райкомсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн çак кăтартăвне тĕрĕс пурнăçламашкăн тата отчотла суйлав пухăвĕсене коммунистсем тапратнă пур ыйтусене çĕнĕçсене те пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тухма хушать".

2-мĕш пунктăн çакăнта кăтартнă абзацне çапла вуламала:

„ПСК(б)П Обкомне çывăх вистăват уйăх хушшинче хăйĕн бюро тата пленумсен ларăвĕсене, парти конференцийĕсене те партин райкомĕсен пухăвĕсене ĕçсене çителĕксĕр тесе йышăннă парти райкомĕсене хула комитечĕн кашни отчотла доклачĕсене итлеме хушас; çав вăхăт хушшинчех партин Шупашкар хула комитечĕн тата мĕнпур райкомсен парти райкомĕсемпе хула комитечĕн бюровĕсене тата пленумĕсене партин пухăвĕ партком йе парторг ĕçне çителĕксĕр тесе йышăннă кашни пуçламăш парторганизацин отчотла докладне итлемеле тата çав парторганизацисене пĕтĕм партилĕ-политикăлă ĕçе çĕклентерессе йамали çĕре туса иртермеле.

ПСК(б)П Обкомне, Шупашкар хула комитетне тата райкомсене пĕр уйăх хушши срукра парти конференцийĕсемпе партин отчотла суйлав пухăвĕсенче коммунистсем тапратнă пур ыйтусемпе çĕнĕçсене те пăхса тухма тата ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1938 çулти августăн 22-мĕшĕнче йышăннă постановленине тĕрĕс пурнăçа кĕртмеле тума хушас".

ПСК(б)П Обкомĕ.

Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Ăмăрту тивлечĕ

(Шупашкарти 3-мĕш номĕрлĕ пекарњă)

Икĕ уйăх çитет ĕнтĕ Шупашкарти 3-мĕш номĕрлĕ пекарњă хăйĕн планне кулленех тултарса ĕçлеме тытăннăранпа. Çак ÿсĕме пекарњă коллективĕ Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса ĕçленипе тунă.

Ку таранччен пекарсен пĕр кăмакана сменă хушшинче 4 хут çăкăр хывма май çук, тенĕ шухăш пулнă. Çавăнпа та ĕç хăвăртлăхне ÿстерессишĕн никам та тăрăшман. Ăмăрту пуçланни çĕрĕк шухăшсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Халĕ пекарњă куллен 18 тоннă çăкăр пĕçерес вырăнне 22 тоннă таран кăларать.

Стаханăвĕçсемпе ударниксем А. Петров, Т. Васильйĕв т. ыт. те 800 килограм çăкăр пĕçерес вырăнне 1680 килограм йе ытларах параççĕ. Çапла вĕсем кивĕ нормăсем пĕчĕк пулнине ĕçпе кăтартаççĕ.

Ăмăртăва хутшăннă 14 бригадă çăкăр пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешеççĕ.

Лукинский.

Аслă уйав умĕн

Чăрăш Çырмари (Вăрмар р.) «Коминтерн» колхоз аслă Октăбер уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, çав чаплă уйава йалхуçалăхĕнче пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Бригадăсем тата колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура Гурйанăв йертсе пыракан пĕрремĕш бригадă малта пырать. Ку бригадăри В. Николайĕвă, А. Максимăвă тата А. Павлăвă колхозницăсем тырпулсене уйран пуçтарса кĕртес, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас ĕçсенче стаханăвла ĕçленипе 250—300-шер ĕçкунĕ тума пултарчĕç.

Колхозри бригадăсем авăн çапса пĕтерне. Государствăна тырă парса татнă. Çавнашкалах пахча-çимĕç бригади пахча-çимĕçсене вăхăтра пуçтарса кĕнĕ. Колхоз пахча-çимĕçсенчен 15 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Кĕрхи çĕртме сухи планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ.

«Коминтерн» колхоз Октăбер уйавне государствă умĕнчи парăмсене парса татнипе кĕтсе илет. Чăрăш Çырма йалсовечĕ те ăмăртса ĕçлет. Тăваттăмĕш квартăл финанс планне 100 процентчĕпех тултарнă.

А. Анисимăв.

Ăмăртăва хутшăннă хыççăн

Голодйайĕвкăри вăрман савăтĕнчи рабочисем Октăберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйава тата ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнипе производствăра çĕнĕ ÿсĕмсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Стаханăвĕç-рамшчик Н. Липатăв йулташ Октăбер умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн кулленхи нормăна 155 процент тултарса ĕçлет. Вăл туса кăларакан тавар пахалăхĕ йаланах отличнă, лайăх. Слесăр Л. Бородин, сменăри машинис Ф. Дунайĕв, М. Ивановă, А. Захарăвă, Сорокин йулташсем те чылай пысăк ÿсĕмсем турĕç. Акă, Бородин, Дунайĕв йулташсем кашни кунах нормăсене 140—150 процент тултарса пыраççĕ.

Голодйайĕвкăри савăтпа ăмăртса ĕçлекен Шупашкарти „Крестьянин" савăтри рабочисем те Октăбер уйавне ĕçре лайăхрах тĕслĕхсем кăтартнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Чернов, Леонтйĕв, Антонăв йулташсем йаланах нормăсене 150—160 процент тултарса ĕçлеççĕ. Уйрăм стаханăвĕçсемпе бригадăсем çулталăк планне Октăбер уйавĕччен тултарма обйазателства илнĕ.

М. Охлин.

Уйав умĕнхи йармăркăсем

Октăбер уйавĕ умĕн Шупашкарта тата районсенче йармăркăсем пулса иртеççĕ. Вăл йармăркăсем валли промышлĕннăç тата йалхуçалăх таварĕсене нумай кÿрсе килеççĕ. Кунсăр пуçне тата йармăркăсенче вырăнти промышлĕннăç таварĕсем нумай пулаççĕ.

Шупашкарта уйав умĕнхи йармăркă октăберĕн 31-мĕшĕнчен пуçласа нойаберĕн 4-мĕшчен пырать. Çак кунсенче Çĕрпÿре тата Çĕмĕрлере йармăркăсем пулса иртнĕ те.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 1-мĕш Уйрăм Хĕрлĕ Йалавлă çарăн Н-ски чаçри командирсемпе бойецсем Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусенче йапонĕçсенчен туртса илнĕ вăрçă хатĕрĕсене майласа хураççĕ (1938 çулти август уйăхĕ).

В. Темин фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Хасан кÿлли районĕнчи çапăçусен участникĕсемпе тĕл пулса калаçнă

ИРКУТСК, октăберĕн 16-мĕш. (ТАСС). Хасан кÿлли районĕнчи çапăçусен паттăр участникĕсем Иркутска пынă. Хулари предприйатисенче ĕççыннисем вĕсемпе хавăслăн тĕл пулса калаçаççĕ.

Чукунçул çинче ĕçлекенсен Иркутск станцинчи пухăвĕнче лейтенант Короњов йулташ тухса каланă.

— Пĕр бойеца,—тесе каласа панă вăл,—самурайсен пысăк ушкăнĕ çавăрса илнĕ. Красноармейĕц ним хăрамасăр самурайсен пысăк ушкăнĕпе çапăçма тытăннă. Çак тĕлпулу тăшманшăн питĕ хаклă ларнă. Красноармейĕц йапонĕçсем çине хăйулăн кĕрсе кайса, вĕсене штыкпа чикнĕ, прикладпа хĕненĕ. Çак çапăçура вăл аманнă. Санитарсем носилкăпа йатса пынă чухне тăна кĕрсе: ăçта манăн винтовкă? тесе ыйтнă вăл. Ăна: винтовкăна илнĕ, анчах йурăхсăра тухнă—приклад самурайсене пуçран çапса хĕненипе йăлтах ванса пĕтнĕ, тесе ответленĕ. Çавăн хыççăн герой вăл пăшала асăнмалăх хăйне пама ыйтнă.

Кĕçĕн командир-артиллерист Уткин йулташ паттăр кунсем çинчен каласа панă чухне темиçе хутчен тăвăллăн ала çупнă.

— Епĕр чĕнмен хăнасене ним йăнăшсăр çĕмĕртĕмĕр,—тет вăл.— Пĕрре çапла Тумыњ йуханшывĕн Манчжури йенĕпе иртекен чукунçул тăрăх бронепойĕс килни курăнса кайрĕ. Вăл пĕр самантлăха çывăхри тоннелрен тухса пĕр-ик хутчен печĕ те, каллех пытанчĕ. Пирĕн артиллериссем çакна алăран вĕçертес мар терĕç. Йапони бронепойĕсĕ тоннелрен тепĕр хут тухнине кĕтсе илчĕç те, артиллериссем бронепойĕс çине тĕллесе пĕрсе сиктерсе йачĕç.

„Иосиф Сталин" пăрçĕмрен инçетри Арктикăра ишсе таврăннă

Октăберĕн 16-мĕшĕнче, кăнтăрла 3 сехетре, „Иосиф Сталин" пăрçĕмрен Мурманска çитнĕ. Пăрçĕмренсен флочĕн флагманĕ карапĕ Арктикăри пĕрремĕш похода ăнăçлăн вĕçленĕ.

Орденоносĕç-капитан Воронин йулташ илсе пынă пăрçĕмрен августăн 23-мĕшĕнче Ленинградран тухса кайнă. Вăл пăрçĕмрен Скандинави çурмаутравĕнчен иртнĕ хыççăн, Мурманскран тытăнса хăйĕн çурçĕрти рейсне пуçланă. Йугорский Шар тата Виљкицский пролив урлă ишсе Лаптевсен тинĕсне çитнĕ, унтан 83 параллел урлă каçса, çурçĕрти пăрлă океанăн ку таранччен сăнаса пăхман районĕсене тухнă. Карап малала хăйулăн ишсе пăрсем хушшинче хăйне валљи çул уçса пынă. Арктикăра ишес вăхăт çывхарса килмен пулсан, вăл çурçĕр бассейнине татах та шаларах кайма пултарнă.

Кайала таврăннă чухне пăрçĕмрен Челюскин сăмсахĕ патне пырса çурçĕрти станцисенче пурăнакансем валљи çĕркăмрăкĕ тата апат-çимĕçсем пушатса хăварнă. Диксон утравĕ патĕнче пăрçĕмренпе пĕрле пынă авиозвенон виçĕ самољотне çырана антарса хăварнă.

Пăрçĕмрен-флагмăн пăрсемпе штормсем хушшинче ишсе хăйĕн çирĕплĕхне, малта пыракан совет техникин вăйне кăтартса панă, вăл ултă тинĕс тата икĕ океанра ишнĕ чухнеаслă Сталинăн йатне чыслăн тытса пынă.

(ТАСС).

Стаханăвĕçсем хăйсен опытне сараççĕ

КАМЕНСКИЙ-УРАЉСКИЙ (Челябинск облăçĕ). Уралаљуминстройра ĕçлекенсене стаханăвла метăдпа ĕçлеме вĕрентес ĕçре интереслĕ мелпе усă кураççĕ. Строительствăн пĕр-пĕр обйектне пĕр-пĕр специаљнăçлă рабочисене (сăмахран, штукатурсене йе плотниксене) пухаççĕ (ĕçлемен вăхăтра). Чи лайăх стаханăвĕçсем вĕсене хăйсен ĕç метăчĕсем çинчен каласа параççĕ. Çакăн хыççăн инженер йе техник кирлĕ пек консуљтаци парать.

Штукатурă ĕçĕсен мастăрĕ стаханăвĕç Шчеколдин йулташ штукатурсене вĕрентнĕ чух 53 минут ĕçлесе 35 тăваткăл метр стенана штукатурă тунă, нормăна 1.275 процент тултарнă.

Комсомолĕçсемпе çамрăксен комплекслă бригади (бригадирĕ—штукатур Иакăвлĕв йулташ), Шчеколдин йулташ опытне вĕреннĕ май ĕçлесе, нормăна 3—3,5 хут иртерсе тултарать.

(ТАСС).

Казахстанри çамрăк хĕрарăмсен сийесĕ

Октăберĕн 16-мĕшĕнче Казахстан столицинче—Алма-Атара çамрăк хĕрарăмсен республикăри иккĕмĕш сийесĕ уçăлнă. 270 делегат хушшинче—предприйатисенчи, совхозсемпе колхозсенчи нумай чаплă стаханăвкăсем, республикă Верховнăй Совечĕн 8 депутачĕ.

Сийес çамрăк хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси çинчен тата пурнăçпа йăлари феодаллă-байла тĕшмĕш йулашкисемпе кĕрешесси çинчен Казахстанри комсомол Тĕпкомĕн çекретарĕн Полјаков йулташăн докладне итленĕ. Сийеса пухăннисем калама çук пысăк хаваслăхпа халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне салам йама йышăннă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Йапони десанчĕ, Кăнтăр Китайра Биас заливĕнче аннăскер, октăберĕн 15-мĕшĕнче Тамшуй хулине (Вейчжоуран кăнтăр-хĕвеланăç йенче) йышăннă. Анчах китайĕçсем çав куннех хулана кайала туртса илнĕ. Тамшуй хулишĕн çапăçса, йапонĕçсен 5.000 çын аманса тата вилсе пĕтнĕ. Çав районра йуханшыв тăрăх çурçĕр йеннеле наступлени пуçланă йапонĕçсене хирĕç китайĕçсем вăйлăн кĕрешеççĕ.

Йапони авиацийĕ Кăнтăр Китайра çынсем пурăнакан хÿтлĕхсĕр пунктсем çине пĕр шеллемесĕр бомбăсем пăрахса çÿрет. Октăберĕн 14-мĕшĕнче Йапонин 102 самољочĕ 450 бомбă пăрахнă. Октăберĕн 15-мĕшĕнче йапонĕçсем Вейчжоу çине 100 бомбă ытла пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем 100 çын шутланаççĕ.

Центр Китайри Бейпин — Хањкоу чукунçулĕ çинче, Хањкоуран çурçĕр йенче, хайар çапăçу хыççăн Китай çарĕсем Синњйанран тухса кайнă. Вăл районра çапăçусем пыраççĕ.

Цзуњзйан—Хањкоу линийĕ çинче, Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕнчи Маошањсы районĕнче, артиллерипе авиаци пулăшнипе йапонĕçсем 1000 çын антарса хăварнă. (ТАСС).

Центр Китайри партизансен кĕрешĕвĕ

Йулашки кунсенче Шанхай таврашĕнче Китай партизанĕсен кĕрешĕвĕ вăйланнă. Путунпа Чжоупу районĕнче 500 çынлă партизан отрйачĕ Йапони гарнизонĕ çине тапăннă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Йапонĕçсене пысăк тăкаксем кÿнĕ. Партизансен активлă кĕрешÿне хирĕç ответлесе, йапонĕçсем мирлĕ пурăнакан çынсем тĕлĕшпе хайар та тискер ĕçсем тунă. Вĕсем хресченсен пÿрчĕсене вут тĕртсе йанă, нумай çынсем чĕрĕллех çунса кайнă. Вилĕмрен хăтăлма хăтланнă çынсене йе персе йе штыкпа чиксе вĕлернĕ. 100 çын ытла пĕтнĕ. 200 çурт ытла çунса кайнă.

Китайăн 63-мĕш дивизин 2 пин çынлă тата 4 пин çынлă отрйачĕсем Сунцзйанпа Фынçан районĕнче кĕрешеççĕ. Партизансем пĕрмайах Шанхай—Ханчжоу чукунçулĕ çине тапăнаççĕ. Сунцзйан патĕнчи чукунçул кĕперне сирпĕтсе йарса, вĕсем çав лини çинчи чукунçул çыхăнăвне татнă.

Тăваттăмĕш çар отрйачĕсем те активлă çапăçаççĕ. Çак кунсенче 300 çынлă отрйад Цзйанињ районĕнче (Йанцзы шывĕн кăнтăр йенчи çыранĕ çинче, Шанхайпа Нанкин хушшинче) Йапони гарнизонĕ çине тапăннă. Çапăçура нумай йапонĕç вилнĕ. Октăберĕн 8-мĕшĕнче 4-мĕш çар отрйачĕ çапăçса Исин йатлă пункта туртса илнĕ (Исин — Тайху кÿллинчен хĕвеланăç йенчи, стратеги тĕлĕшĕнчен паха пункт).

Уху çывăхĕнче партизансен активлăхĕ ÿссе кайнă. Октăберĕн 14-мĕшĕнче Ухуран пуканеле „правителствă" отрйадне партизансене хирĕç кĕрешме кăларса йанă пулнă, вăл отрйад йапонĕçсене хирĕç восстани тунă. 3 офицера тата Йапонин 50 салтакне вĕлерсе, отрйад Китай партизанĕсемпе пĕрлешнĕ. (ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

КĔСКЕ КУРС.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

III-мĕш сыпăкăн малалли

4. Ревољуци малала çĕкленсе пыни. 1905 çулти окт̆абĕрте пулнă Пĕтĕм Роççийăри политикăлă стачкă. Патша йĕрки кайала чакни. Патша манифесĕ. Рабочисен депутачĕсен Совечĕсем пуçланса кайни.

1905 çулти кĕркунне тĕлне ревољуцилĕ йухăм пĕтĕм çĕршыва сарăлнă. Вăл пит те вăйлăн ӳссе пынă.

Çент̆абĕрĕн 19-мĕшĕнче Мускавра печатниксен забастовки пуçланнă. Вăл Петербурга тата ытти чылай хуласене кусна. Мускавра хăйĕнче печатниксем пуçланă забастовкăна ытти производствăсенчи рабочисем хутшăннă, ку забастовка пĕтĕмĕшле политикăлă стачкă пулса кайнă.

Окт̆абĕр пуçламĕшĕнче Мускав—Хусан чукунçулĕ çинче забастовкă пуçланнă. Тепĕр кунтан Мускаври чукунçул узелĕ пĕтĕмпех забастовкă пуçланă. Часах забастовкă çĕршыври мĕнпур чукунçулсем çинче сарăлса кайнă. Почтăпа телеграф ĕçлеме пăрахнă. Роççийăри тĕрлĕ хуласенче рабочисем нумай пин çынлă митингсене пухăна-пухăна, ĕçлеме чарăнма йышăннă. Забастовкă хапрăкран хапрăка, савăтран савăта, хуларан хулана, районран района сарăлса пынă. Забастовкă тăвакан рабочисем патне кĕçĕн служăщичисем, вĕренекенсем, интеллигенци—адвокатсем, инженерсем, врачсем хутшăнса пынă.

Окт̆абĕрти политикăлă забастовкă, пĕтĕм çĕршыва пекех, чи инçетри районсем таранах сарăлса, пĕтĕм Роççийăри забастовкă пулса тăнă, çак забастовкăна рабочисем пурте пекех, чи кайа йулнă сийсем таранах, хутшăннă. Пĕтĕмĕшле политикăлă стачкăна промышлĕннăçра ĕçлекен рабочисемех миллион çынна йахăн хутшăннă, ку шута железнодорожниксем, почтăпа телеграф служăщичисем тата ыттисем кĕмеççĕ, вĕсем хушшинче те забастовкăна хутшăннисем пысăк йышлă пулнă. Çĕршывăн пĕтĕм пурнăçĕ чарăнса ларнă. Правителствă вăйне ним тăвайми туса хунă.

Рабочи клас халăх массисен самодержавине хирĕç кĕрешĕвне пуçарса йертсе пынă.

Бољшевиксен массăлă-политикăлă стачкă çинчен калакан лозунгĕ хăйĕн резуљтачĕсене панă.

Окт̆абĕрти пĕтĕмĕшле забастовкă, пролетарилĕ йухăмăн вăйĕпе хăватне кăтартнăскер, вилеслех хăраса ӳкнĕ патшана окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнчи манифеста кăларттарнă. 1905 çулта окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнче кăларнă манифестра халăха „граждăнсен ирĕклĕхĕн никам пăсайми никĕсĕсене: çынна чăннипех никам тĕкĕнме пултарайман йĕрке тума, совĕç, сăмах, пухусен тата сойузсен ирĕклĕхĕсене“ пама пулнă. Саккунсем кăларакан думăна пухма, суйлавсене халăхăн пур класĕсене те хутшăнтарма сăмах панă.

Çапла вара, ревољуци вăйĕпе Булыгинăн канашлакан правалă думине шăлса ыватнă. Булыгин думине бойкот тунă бољшевикла тактикă тĕрĕс пулнă.

Çапах та, çавна пăхмасăрах, окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнчи манифест халăх массисене улталани, патшан чейелĕхĕ, хăйне майла сывлăш çавăрса илни пулнă, вăл патшана çăмăллăнах ĕненекенсене сывратса йама тата вăхăта тăсма, вăйсене пухма, унтан вара ревољуцине çапма кирлĕ пулнă. Патша правителстви, сăмахпа ирĕклĕх пама пулса, чăннипе палармалăх нимĕн те паман. Рабочисемпе хресченсем правителствăран халлĕхе сăмахсăр пуçне урăх нимĕн те илеймен-ха. Кĕтсе тăнă политикăлă анлă амнисти вырăнне окт̆абĕрĕн 21-мĕшĕнче политикăлă ĕçсемшĕн хупнисен пĕчĕк пайне амнисти панă. Çав вăхăтрах халăхăн вăйне сапалантарас ĕмĕтпе правителствă темиçе çĕрте йеврейсене хирĕç йунлă погром организациленĕ, çак погромсем вăхăтĕнче пиншер-пиншер çынсем вилнĕ, ревољуцине çĕмĕрме „Союз русского народа“ тата „Союз Михаила Архангела“ йатлă бандитла полицилĕ организацисем тунă. Реакцилĕ помещиксем, купцасем, попсем тата çапкаланчăксен хушшинчи çурма-уголовнăй елементсем паллă вырăн йышăнса тăнă, çав организацисене халăх „черная сотня“ тесе йат панă. Полици пулăшнипе черносотĕнецсем малта пыракан рабочисене, интеллигентсен хушшинчен тухнă ревољуционерсене, студентсене уçăнах хĕненĕ тата вĕлернĕ, вут тĕртсе çунтарнă тата граждăнсен пухăвĕсемпе митингĕсене пăшалпа персе салата-салата йанă. Çакăн пек курăнса тăнă халлĕхе патша манифесĕн резуљтачĕсем.

Унчухне халăх хушшинче патша манифесĕ çинчен çакăн пек йурă çӳренĕ:

„Царь испугался, издал
манифест:
Мертвым—свобода, живых—под
арест“.

Бољшевиксем массăсене окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнчи манифест—ултав танати пулса тăни çинчен ăнлантарнă. Правителствăн манифест кăларнă хыççăнхи ĕçĕсене бољшевиксем провокаци вырăнне хурса питленĕ. Бољшевиксем рабочисене алла хĕçпăшал тытма, хĕçпăшаллă восстанине хатĕрленме чĕннĕ.

Рабочисем тата ытларах хастарлăхпа бойевой дружинăсем тума тытăннă. Вĕсем окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнчи малтанхи çĕнтерӳ, пĕтĕмĕшле политикăлă забастовкă тунипе туртса илнĕскер, вĕсене патша йĕркине сирпĕтсе антарма малашне те вăй хума, малала кĕрешсе пыма хушнине уççăн курса тăнă.

Окт̆абĕрĕн 17-мĕшĕнчи манифеса Ленин вăхăтлăха вăйсем шайланнă самант тесе хакланă, патшаран манифест туртса илнĕ пролетариатпа хресченсем унчухне патша йĕркине йăвантарса йама **вăй çитменха, патша йĕрки текех ĕнтĕ** унччĕнхи майсемпе тытса тăма пултарайман, унăн ирĕксĕрех „граждăнла ирĕксем“ пама тата „саккунсем кăларакан“ думă пухма сăмах памала килнĕ.

Окт̆абĕрти политикăлă стачкăн тăваллă кунĕсенче, патша йĕркине хирĕç пынă кĕрешӳн вут-хĕмĕнче, рабочисен массин ревољуцилĕ пултарулăхĕ çĕнĕ вăйлă хĕçпăшал—рабочисен депутачĕсен Совечĕсене туса хунă.

Пур хапрăксемпе савăтсен делегачĕсен пухăвĕ пулса тăнă рабочисен депутачĕсен Совечĕсем рабочи класăн халиччен тĕнчере пулман массăлă политикăлă организацийĕсем пулнă. 1905 çулта чи малтан çуралнă Советсем пролетариат бољшевикла парти йертсе пынипе 1917 çулта тунă Совет влаçĕн сăнĕ (прообразĕ) пулнă. Советсем халăх пултарулăхĕн ревољуцилĕ çĕнĕ формисем пулнă. Вĕсене пĕтĕмпех халăхăн ревољуцилĕ сийĕсем, патша йĕркин пур тĕрлĕ саккунĕсемпе нормисене те çĕмĕрсе, тунă. Вĕсем патша йĕркине хирĕç кĕрешĕве çĕкленсе пынă халăхан хăйĕн пултарулăхĕ паларни пулнă.

Бољшевиксем Советсене ревољуцилĕ влаçăн пуçламĕшĕсем тесе шутланă. Вĕсем Советсен вăйĕ тата пĕлтерĕшĕ пĕтĕмпех восстанин вăйĕнчен тата вăл ăнăçлă пулнинчен килет, тесе шутланă.

Мењшевиксем Советсене ревољуцилĕ влаç органĕсен пуçламĕшĕ тесе те, восстани органĕсем тесе те шутламан. Вĕсем Советсем çине хуласенчи демократизациленĕ самоуправленисем йевĕрлĕ вырăнти самоуправлени органĕсем çине пăхнă пек пăхнă.

1905 çулти окт̆абĕрĕн 13 (26)-мĕшĕнче Петербургра пур хапрăксемпе савăтсенче те рабочисен депутачĕсен Совет суйлавĕсем пулса иртнĕ. Çĕрле Советăн пĕрремĕш ларăвĕ пулнă. Петербург хыççăн Мускавра рабочисен депутачĕсен Совечĕ организациленет.

Петербургри, Роççийăн промышлĕннăçлă тата ревољуцилĕ пысăк центрĕнчи, патша империн столицинчи, рабочисен депутачĕсен Совечĕн 1905 çулти ревољуцире ĕçе татса парас вырăнта тăмала пулнă. Анчах вăл, Советăн руководстви начар, мењшевикла пулнă пирки, хăйĕн задачисене пурнăçа кĕртеймен. Паллă ĕнтĕ, çав вăхăтра Ленин Петербургра пулман, вăл унчухне те йут çĕршывра пулнă. Мењшевиксем Ленин унта пулманнипе усă курса, Петербургри Совета кĕрсе кайнă та унта руководствăна хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Çавнашкал условисенче Хрусталев, Троцкий, Парвус тата ытти мењшевиксем Петербургри Совета восстани тăвас политикăна хирĕç çавăрма пултарнинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук ĕнтĕ. Салтаксене Совет патне çывхартас тата вĕсене пĕрлехи кĕрешӳре çыхăнтарас вырăнне, мењшевиксем салтаксене Петербургран кăларса йама ыйтнă. Рабочисене хĕçпăшаллантарса восстанине хатĕрлес вырăнне, Совет пĕр вырăнтах тапăртатса тăнă тата восстани тума хатĕрленесшĕн пулман.

Рабочисен депутачĕсен Мускав Совечĕ ревољуцире пачах урăхла вырăн йышăнса тăнă. Мускав Совечĕ малтанхи кунсенченех вĕçне çитиех ревољуцилĕ политикă тытса пынă. Мускав Советне бољшевиксем йертсе пынă. Бољшевиксене пула Мускавра рабочисен депутачĕсен Совечĕпе йунашар салтаксен депутачĕсен Совечĕ пуçланса кайнă. Мускав Совечĕ хĕçпăшаллă восстани органĕ пулса тăнă.

1905 çулти окт̆абĕр — декабĕр уйăхĕсенче рабочисен депутачĕсен Совечĕсене пысăк хуласенче чылайĕшĕсенче тата рабочисен центрĕсенче пуринче те пекех тунă. Салтаксемпе матроссен депутачĕсен Совечĕсене туса, вĕсене рабочисен депутачĕсен Совечĕсемпе пĕрлештерме тытăнса пăхнă. Хăшпĕр çĕрте рабочисемпе хресченсен депутачĕсен Совечĕсене тунă пулнă.

Советсен влийанийĕ пит пысăк пулнă. Вĕсем час-часах хăйсем тĕллĕнех пуçланнă пулин те, йĕркеленсе çитмен тата хăйсен составĕ йенчен çирĕп мар пулнă пулин те, вĕсем влаç вырăнне ĕçлесе тăнă. Советсем вăйпа туртса илсе пичет ирĕклĕхне ĕçе кĕртсе пынă, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ туса пынă, патша правителствине налогсем ан тӳлĕр тесе халăха чĕнсе каланă. Уйрăм тĕлсенче вĕсем патша правителствин укçа-тенкине тытса илнĕ, ăна ревољуцишĕн кирлĕ çĕре йанă.

5. Декабĕрти хĕçпăшаллă восстани. Восстани парăнни. Ревољуци кайала чакни. Пĕрремĕш Государственнăй думă. Партин IV-мĕш (пĕрлештерӳлĕ) сйесĕ.

1905 çулти окт̆абĕрпе нойабĕрте массăсен ревољуцилĕ кĕрешĕвĕ малала вăйлăн сарăлса ӳссе пынă. Рабочисен забастовкисем малала пулса пынă.

Хресченсем помещиксене хирĕç кĕрешни 1905 çулти кĕркунне пит анлăн сарăлнă. Хресченсен йухăмĕ пĕтĕм çĕршыври уйессенчен виççĕмĕш пайĕнче ытла сарăлнă. Саратăв, Тамбов, Чернигов, Тифлис, Кутаис тата ытти хăшпĕр кĕпĕрнесенче хресченсен чăн-чăн восстанийĕсем пулнă. Çапах та хресченсен массисен хĕсĕвĕ çителĕксĕр пулнă-ха. Хресченсен йухăмне организацилĕх тата руководствă çитмен.

Чылай хуласенче — Тифлисра, Владивостокра, Ташкентра, Самаркандра, Курскра, Сухумире, Варшавăра, Кийĕвра, Ригăра салтаксем хушшинче те пăлханусем вăйланнă. Кронштадтра тата Хура тинĕс флотĕнчи матроссем хушшинче Севастопољре (1905 çулти нойабĕрте) восстани сиксе тухнă. Анчах вĕсем уйрăмăн-уйрăмăн пулнă пирки, çав восстанисене патша йĕрки пусарнă.

Çарăн тата флотăн уйрăм чаçĕсенче восстанисем час-часах офицерсем салтаксене хăйаррăн тыткаланăран, апат-çимĕç начар пулнăран („гороховые бунты“) тата ыт. пирки пуçланса кайнă. Восстани тăвакан матроссемпе салтаксен массин патша правителствине сирпĕтсе антарма кирлине, хĕçпăшаллă кĕрешĕве хастарлăн малала илсе пыма кирлине уççăн ăнланса илни пулман-ха. Восстани тăвакан матроссемпе салтаксем халлĕхе ытла та мирлĕ, [illegible] чуллă пулнă, вĕсем, восстани пуçланнă чухне арĕсленĕ офицерсене ирĕке кăларса, час-часах йăнăшсем тунă, начаљствă сăмахсем панине тата ӳкĕтленине итлесе хăйсене лăплантарма панă.

Ревољуци таччăнах хĕçпăшаллă восстани патне çитнĕ. Бољшевиксем массăсене патшапа помещиксене хирĕç хĕçпăшаллă восстани тума чĕннĕ, восстани пурпĕрех пуласси çинчен вĕсене ăнлантарса панă. Бољшевиксем çине тăрса хĕçпăшаллă восстани хатĕрленĕ. Салтаксемпе матроссем хушшинче ревољуцилĕ ĕçе туса пынă, армире партин çар организацийĕсене тунă. Чылай хуласенче рабочисенчен бойевой дружинăсене тунă. Дружинниксене хĕçпăшала тыткалама вĕрентнĕ. Йут çĕршывсенче хĕçпăшал туйанса, ăна вăрттăн майпа Роççийăна илсе килессине организациленĕ. Хĕçпăшалсене турттарса килессине организацилес ĕçе партин паллă работникĕсем хутшăннă.

1905 çулти нойабĕрте Ленин Роççийăна таврăннă. Патша жандармисенчен тата шпионĕсенчен пытанса пурăнса, Ленин çав кунсенче хĕçпăшаллă восстани хатĕрлес ĕçе тӳрремĕнех хутшăнса ĕçленĕ. Унăн бољшевикла „Новая жизнь“ хаçатри статйисем партишĕн кулленхи ĕçри кăтартусем пулнă.

Çав вăхăтра Сталин йулташ Закавказйĕре ревољуцилĕ пит пысăк ĕçсем туса пынă. Сталин мењшевиксене, ревољуцине тата хĕçпăшаллă восстанине хирĕç тăнăскерсене, тăрă шыв çине кăларса çĕмĕрсе пынă. Вăл рабочисене самодержавине хирĕç татăклăн çапăçма çирĕппĕн хатĕрлесе пынă. Патша манифесĕ тухнă кун Тифлис хулинче пулнă митингра Сталин йулташ рабочисене çапла каланă:

„Мĕн кирлĕ-ха пире, чăннипех çĕнтерме? Çакна тума виçĕ йапала кирлĕ: пĕрремĕшĕ—хĕçпăшалланни, иккĕмĕшĕ—хĕçпăшалланни, виççĕмĕшĕ — тата, тата та тепĕр хут хĕçпăшалланни“.

1905 çулти декабĕрте Финљандире, Таммерфорсра, бољшевиксен конференцийĕ пухăннă. Бољшевиксем тата мењшевиксем формаљнă пĕр социал-демократилĕ партире тăнă пулин те, вĕсем чăннипе икĕ расна парти пулнă, вĕсен уйрăм центрсем пулнă. Çак конференцире Ленинпа Сталин малтанхи хут пĕр-пĕринпе куçа-куçăн тĕл пулнă. Унччен вĕсем пĕрпĕринпе çырусем урлă тата йулташĕсем урлă çыхăну тытнă.

Таммерфорсри конференцин решенийĕсенчен иккĕшне палăртма кирлĕ: пĕрийĕ—чăннипе икĕ партине уйăрăлнă партире тепĕр хут пĕрлĕх тăвасси çинчен тата теприйĕ—виттевски тенĕ пĕрремĕш думăна бойкот тăвасси çинчен.

Çав вăхăт тĕлне Мускавра хĕçпăшаллă восстани пуçланнă пирки, Ленин канаш панипе, конференци хăйĕн ĕçĕсене васкавлăн туса пĕтернĕ, делегатсем хăйсем восстанине хутшăнма вырăнсене саланнă.

Анчах патша правителстви те çывăрман. Вăл та татăклă çапăçăва хатĕрленнĕ. Йапонипе мир туса, çакăнпа хăйĕн йăвăр лару-тăруне çăмăллатса, патша правителстви рабочисемпе хресченсем çине наступлени тума тытăннă. Патша правителстви хресченсен восстанийĕсем сарăлса кайнă чылай кĕпĕрнесенче вăрçă чухнехи пек положени тунă, „арĕсленисем пулмала мар“, „патронсене хĕрхенмеле мар“ текен пит хăйар приказсем кăларнă, ревољуцилĕ йухăмăн руководителĕсене арĕслеме тата рабочисен депутачĕсен Совечĕсене салатса йама хушнă.

Çавна май Мускав бољшевикĕсем тата вĕсем йертсе пынă, рабочисен анлă массисемпе çыхăнса тăнă рабочисен депутачĕсен Мускав Совечĕ ним вăраха йамасăр хĕçпăшаллă восстани тума хатĕрленмеле тунă. Декабĕрĕн 5 (18)-мĕшĕнче Мускав комитечĕ: Совета пĕтĕмĕшле политикăлă забастовка пуçласа йама хушас, кĕрешӳ пынă май политикăла забастовкăран восстани туса йарас, тесе решени йышăннă. Рабочисен массăлă пухăвĕсенче çав решенишĕн тăнă. Мускав Совечĕ рабочи класĕн ирĕкне шута илнĕ те пĕтĕмĕшлĕ политикăлă забастовкă пуçласа йарасси çинчен пĕркăмăллăн постановлени йышăннă.

Восстани пуçласа йанă Мускав пролетариачĕн хăйĕн бойевой организацийĕ—пĕр пине йахăн дружинниксем пулнă, вĕсенчен çурри ытла бољшевиксем пулнă. Бойевой дружинăсем çавнашкалах Мускаври чылай хапрăксенче пулнă. Восстани тăвакансен пурĕ икĕ пине йахă дружинниксем пулнă. Рабочисем гарнизона нихăш йенĕшĕн те тăми тума, гарнизонăн пĕр пайне уйăрса ăна хăйсем хыççăн илсе кайма шутланă.

Декабĕрĕн 7 (20)-мĕшĕнче Мускавра политикăлă забастовкă пуçланнă. Анчах забастовкăна пĕтĕм çĕршыва сарса йарасси пулайман,—çак забастовкăна Петербургра та çителĕклĕ пулăшман, çакă вара пуçламĕшĕнчех восстани ăнăçлă пулас шанчăка сахаллатнă. Николайĕвски, халљхи Окт̆абĕрски, чукунçул патша правителстви аллинче йулнă. Çав çул тăрăх çӳресси чарăнман, правителствă Петербургран Мускава гварди полкисене восстанине пусарма илсе пыма пултарнă.

Мускавра хăйĕнче гарнизон иккĕленнĕ. Рабочисем гарнизон вĕсене пулăшассине шанса тăнипе те ĕнтĕ восстани пуçланă. Анчах ревољуционерсем вăхăта ирттерсе йанă, патша правителстви гарнизонри пăлханусене пусарнă.

Декабĕрĕн 9 (22)-мĕшĕнче Мускавра пирвайхи баррикадăсене тунă. Часах Мускав урамĕсем баррикадăсемпе витĕннĕ. Патша правителстви артиллерине хута йанă. Вăл восстани тăвакансен вăйĕнчен нумай хут вăйлăрах çар пухнă. Хĕçпăшалланнă темиçе пин рабочисем тăхăр кун хушши паттăррăн кĕрешнĕ. Петербург, Тверь хулисенчен тата Хĕвеланăç крайĕнчен çар полкисене илсе пырсан тин патша йĕрки восстанине пусарма пултарнă. Восстанин йертсе пыракан органĕсене çапăçу умĕнхи кун пĕрисене арĕсленĕ, теприсене восстанине йертсе пырассинчен уйăрнă. Бољшевиксен Мускав комитетне арĕсленĕ. Хĕçпăшаллă выступлени пĕр-пĕринпе çыхăнса тăман уйрăм районсен восстанийĕ пулса кайнă. Йертсе пыракан центрсăр йулсан, пĕтĕм хулипе кĕрешӳ планĕ пулман пирки районсем пуринчен ытла оборонă тунипе чарăнса тăнă. Çакă вăл,—Ленин кайарахпа палăртнă пек,—Мускаври восстанин вăйсăрлăхĕн тĕп çăлкуçĕ тата восстани парăннин сăлтавĕсенчен пĕрийĕ пулнă.

Мускаври Хĕрлĕ Преснљăра восстани уйрăмах вăйлăн та хăйаррăн пулса иртнĕ. Хĕрлĕ Преснљă восстанин тĕп крепăçĕ, унăн центрĕ пулнă. Кунта чи лайăх бойевой дружинăсем пухăннă, вĕсене бољшевиксем йертсе пынă. Анчах Хĕрлĕ Преснљăна вутпа-хĕмпе тата хĕçпе пусарнă, ăна йун айне тунă, вăл артиллери тивретсе йанă пушарсен çулăмĕпе йалкăшса çуннă. Мускаври восстанине пусарнă.

Восстани Мускавра кăна мар пулнă. Ревољуцилĕ восстанисем ытти чылай хуласемпе районсене те сарăлнă. Хĕçпăшаллă восстанисем Краснойарскра, Мотовилихăра (Пермь), Новороссийскра, Сормовăра, Севастопољра, Кронштадтра пулнă.

Роççийăри пусмăрти халăхсем те хĕçпăшаллă кĕрешĕве çĕкленнĕ. Грузире пур çĕрте те пекех восстани сарăлса кайнă. Украинăри Донбасра: Горловкăра, Александрăвскра, Луганскра (Ворошиловград) пысăк восстани пулса иртнĕ. Латвире кĕрешӳ пит вăйлă пулнă. Финљандире рабочисем хăйсен Хĕрлĕ гвардине туса, восстани пуçланă.

Анчах çак восстанисене пурне те, Мускаври восстанине пусарнă пекех, патша йĕрки етемле мар тискер хăйарлăхпа пусарнă.

Мењшевиксем тата бољшевиксем декабĕрти хĕçпăшаллă восстанине тĕрлĕрен хакланă.

Мењшевик Плеханăв хĕçпăшаллă восстани хыççăн партине ӳпкелесе: „Алла хĕçпăшал тытма кирлĕ марччĕ“, тесе каланă. Мењшевиксем: восстани — кирлĕ мар тата сийенлĕ ĕç, ревољуцире восстанисĕрех май тухаť, хĕçпăшаллă восстанипе мар, кĕрешӳри мирлĕ майсемпех ăнăçу тума пулаť, тесе ĕнентерессшĕн пулнă.

Восстанине çавнашкал хаклани вăл—предателле хаклани пулаť тесе питленĕ бољшевиксем. Вĕсем Мускаври хĕçпăшаллă восстанин опычĕ рабочи класăн хĕçпăшаллă кĕрешĕвĕ ăнăçлă пулма пултарассине çирĕплетсе пачĕ ĕнтĕ, тесе шутланă. Плеханăв: „Алла хĕçпăшал тытма кирлĕ марччĕ“, тесе ӳпкелешнине хирĕç, Ленин çапла ответленĕ:

„Йалтах урăхла, татăклăнрах, хăватлăнрах тата наступлени тумалах алла хĕçпăшал тытмала пулнă, массăсене мирлĕ стачкă тунипе кăна ĕç тухас çуккине тата нимĕнрен хăраман, ниме хĕрхенмен хĕçпăшаллă кĕрешӳ кирлине ăнлантарса памала пулнă (**Ленин, т. X, стр. 50**).

1905 çулти декабĕрти восстани ревољуци чи çӳле çĕкленнĕ тĕл пулнă. Декабĕрте патша самодержавийĕ восстанине парăнтарнă. Декабĕрти восстани парăннă хыççăн ревољуци йерипен кайала чакса пырасси патне çаврăнни пуçланнă. Ревољуци çĕкленĕвĕ ревољуци йерипен чакса пырассипе улшăннă.

Патша правителстви çав парăнупа ревољуцине пĕтерсе хума усă курма васканă. Патша палачĕсемпе тӳремшчикĕсем хăйсен йунлă ĕçне сарса йанă. Каратĕлнăй експедицисем Пољшăра, Латвире, Естонире, Закавказйĕре, Çĕпĕрте çав тери хăйаррăн асса çӳренĕ.

Анчах, ревољуцине пусарайман пулнă-ха. Рабочисем тата ревољуцилĕ хресченсем вăраххăн, çапăçусемпе кайала чакса пынă. Кĕрешĕве рабочисен çĕнĕ сийĕсем хутшăнса пынă. Стачкăсене 1906 çулта рабочисем миллион çын ытла хутшăннă. 1907 çулта — 740 пин çын. Хресченсен йухăмĕ 1906 çулти пĕрремĕш çурçулта патша Роççийĕнчи мĕнпур уйессенчен çуррине йахăн, çав çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче — мĕнпур уйессенчен пилĕкĕмĕш пайĕнче сарăлнă. Çарта тата флотра пăлханусем малала пулса пынă.

Патша правителстви ревољуцине хирĕç кĕрешессинче репрессисемпе кăна чарăнса тăман. Репрессисене пула пирвайхи ăнăçусене тунă хыççăн, вăл „саккунсем кăларакан“ çĕнĕ думă пухса ревољуцине çĕнĕрен çапма шутланă. Вăл çавнашкал думăна пухса хресченсене ревољуциран уйăрасшăн, çакăнпа ревољуцине тĕп тăвасшăн пулнă. 1905 çулти декабĕрте патша правителстви, бољшевиксем бойкот тунипе шăлса ыватнă „канашлакан“ булыгинла кивĕ думăран расна думă—„саккунсем кăларакан“ çĕнĕ думă пухасси çинчен саккун кăларнă. Патша кăларнă суйлав саккунĕ, паллах ĕнтĕ, демократине хирĕçле пулнă. Суйлавсем пурне те тивĕç суйлавсем пулман. Халăх йышĕн çуррине ытла, сăмахран, хĕрарăмсене тата рабочисене 2 миллион çын ытла пĕтĕмпех саса прависĕр хăварнă. Суйлавсем пĕртан суйлавсем пулман. Суйлавçăсене, унчухне каланă пек, 4 курине уйăрнă: çĕр хуçисен (помещиксен), хуларисен (буржуази), хресченсен тата рабочисен курийĕсене. Суйлавсем тӳрех мар, нумай сыпăклă суйлавсем пулнă. Суйлавсем чăннипе илсен вăрттăн пулман. Суйлав саккунĕ думăра помещиксемпе капиталиссен пĕчĕк группи миллионшар рабочисемпе хресченсенчен темĕн чухлĕ ытларах пулма май панă.

Патша думăпа массăсене ревољуциран уйăрасшăн пулнă. Хресченсен чылай пайĕ çав вăхăтра думă урлă çĕр илме пулассине ĕненнĕ. Кадетсем, мењшевиксем тата есерсем рабочисемпе хресченсене восстанисĕрех, ревољуцисĕрех халăха кирлĕ йĕркесене тума пулаť, тесе улталанă. Халăха çавнашкал улталанине хирĕç кĕрешсе пырса, бољшевиксем, Таммерфорсри конференци йышăннă решени тăрăх, I Государтсвĕннăй думăна бойкот тăвас тактикăна пуçласа йарса ĕçе кĕртнĕ.

Патша йĕркине хирĕç кĕрешсе пырса, рабочисем çавăнпа пĕрлех партин вăйне пĕрлĕхлĕ тума, пролетариат партине пĕрлештерме ыйтнă. Таммерфорсри конференци пĕрлĕх çинчен йышăннă паллă решенипе хĕçпăшалланнă бољшевиксем рабочисен çав требованийĕшĕн тăрса, мењшевиксене партин пĕрлештерӳлĕ сйесне пухма сĕннĕ. Рабочисен массисем хĕснине пула мењшевиксен ирĕксĕрех пĕрлешме килĕшӳ памала пулнă.

Ленин пĕрлешессишĕн тăнă, анчах вăл ревољуцилĕ ыйтусем тăрăх разногласисене шăлса лартман пĕрлешӳшĕн тăнă. Примиренецсем (Богданăв, Красин тата ыт. те) партине пысăк сийен кӳнĕ, вĕсем бољшевиксем тата мењшевиксем хушшинче пысăк разногласисем çук, тесе ĕнентерме тăрăшнă. Примиренецсене хирĕç кĕрешсе, Ленин çакăн пек требовани лартнă: бољшевиксен сйеса хăйсен платформипе пымала, бољшевиксем мĕнле позици çинче тăнине тата пĕрлешӳ мĕнле никĕс çинче пулса пынине рабочисем уççăн курса тăччăр, тесе. Бољшевиксем çавăн пек платформăна хатĕрленĕ те, сӳтсе-йавма парти членĕсем патне йанă.

1906 çулти апрељре Стокгољмра (Швеци) РСДРП IV-мĕш, Пĕрлештерӳлĕ тенĕ сйесĕ пухăннă. Сйесра ĕçтăвакан сасăлă делегатсем 111 пулнă, вĕсене партин вырăнти 57 организацийĕнчен суйласа йанă. Унсăр пуçне, сйесра нацилĕ социал-демократла партисен представителĕсем пулнă: Бундран—3, Пољшăри социал-демократла партирен—3 тата латышсен социал-демократла организацинчен—3.

Декабĕрти восстани вăхăтĕнче тата восстани хыççăн бољшевиксен организацисене çĕмĕрсе тăкнă пирки вĕсем пурте мар делегатсем йама пултарнă. Кунсăр пуçне, мењшевиксем 1905 çулти „ирĕклĕх кунĕсенче“ хăйсен ретне ревољуцилĕ марксисăмпа нимĕн те çыхăнса тăман вак буржуалă интеллигентсен массине илсе тултарнă. Çакна кăтартса парсан та çителĕклĕ: Тифлисри мењшевиксем (Тифлисра промышлĕннăй рабочисем сахал пулнă) сйеса пролетарилĕ пысăк организаци—Петербургри организаци йанă чухлĕ делегатсем йанă. Çавна пула Стокгољмри сйесра мењшевиксем нумайрах, чăн та, кăшт çеç пулин те, ытларах пулнă.

Малалли 3-мĕш страницăра

М А Л А Л И.

Съезд чылай ыйтусем тăрăх меньшевикла характерлĕ решенисем йышăнни съезăн составĕ çавăн пек пулнинчен килнĕ.

Çак съездра формальнă пĕрлешни кăна пулнă. Çăннипе большевиксем тата меньшевиксем хăйсен шухăшĕсемпех, хăйсен харпăрхăй тĕллĕн организацийĕсем пех йулнă.

IV-мĕш съездра сӳтсе-йавнă чи тĕп ыйтусем çаксем пулнă: аграрнăй ыйту, хальхи вăхăта хакласси тата пролетариатăн класлă задачисем, Государственнăй дума çине мĕнле пăхасси, организацилĕ ыйтусем.

Меньшевиксем çак съездра ытларахăн пулнă пулин те, рабочисене хăйсенчен тĕртсе йарас мар тесе, вĕсен уставăн парти членлĕхĕ çинчен калакан пĕрремĕш параграфне ленинла формулировкăпа йышăнма тивнĕ.

Аграрнăй ыйтура Ленин çĕре национализацилессишĕн тăнă. Ленин—революци çĕнтерсен тин, патша йĕркине сирпĕтсе антарнă хыççăн тин çĕре национализацилеме пулать, тесе шутланă. Çĕре национализацилени çавăн чухне пролетариат йалти чухăн хресченсемпе союзлă пулса социалисăмлă революцине куçассине çăмăллатнă. Çĕре национализацилеме помещиксен пĕтĕм çĕрне хресченсем уса курма тӳлевсĕр туртса илмеле (конфискацилемеле) пулнă. Большевиксен аграрнăй программи хресченсене патшапа помещиксене хирĕç революци тума чĕннĕ.

[illegible] че тăнă. Вĕсем çĕре муниципализацилес программăшăн тăнă. Çав программă тăрăх, помещиксен çĕрĕсем хресченсен общинисен аллине мар, вĕсем уса курма та мар, муниципалитетсен (урăхла каласан, вырăнти самоуправленисен йе земствăсен) аллине кĕмеле пулнă. Хресченсен çав çĕре кашнин хăйсен вăйĕ çитнĕ таран тара илмеле пулнă.

Меньшевиксен муниципализацилес программи—соглашательле, çавăнпа—революцишĕн сиенлĕ программă пулнă. Вăл хресченсене революцилĕ кĕрешĕве мобилизацилеме пултарайман, ăна помещиксем çĕр хуçисем пулса тăрассине пĕтĕмпех пĕтерес шутпа туман. Меньшевиксен программине революци çурма çулта чăрăнассине шута илсе тунă. Меньшевиксем хресченсене революци тума çĕклесшĕн пулман.

Съезд нумайрах сасăпа меньшевиксен программине йышăннă.

Хальхи вăхăта хакласси тата Государственнăй дума çинчен резолюцине сӳтсе-йавнă чухне меньшевиксем хăйсен пролетариата хирĕçле, оппортунисла ăшчиккине уйрăмăнах палартнă. Меньшевик Мартынăв пролетариатăн революцири гегемонине хирĕç уççăнах тăнă. Меньшевиксене ответлесе, Сталин йулташ ыйтăва тӳррĕн те çивĕччĕн лартнă:

„Йе пролетариат гегемонийĕ, йе демократилĕ буржуази гегемонийĕ—акă мĕнле тăрать ыйту партире, акă мĕнре пирĕн разногласисем".

Государственнăй дума тĕлĕшпе, ăна меньшевиксем хăйсен резолюцийĕнче революци ыйтăвĕсене татса памали, халăха патша йĕркинчен хăтармали чи лайăх май тесе мухтанă. Большевиксем, йалтах урăхла, дума—патша йĕркин вăйсăр придатăкĕ, патша йĕркин йуханусуранĕсене витсе тăракан хӳме пулать, патша йĕрки ăна хăйне йурăхсăр пулса тăрсан çийĕнчех ывăтса йарать, тесе шутланă.

IV-мĕш съездра суйланă Тĕп Комитета 3 большевик тата 6 меньшевик кĕнĕ. Тĕп органăн редакцине меньшевиксем кăна кĕнĕ.

Парти ăшĕнчи кĕрешӳ малала пулса пырасси уççăнах курăнса тăнă.

Большевиксем тата меньшевиксем хушшинчи кĕрешӳ IV-мĕш съезд хыççăнсене вăйлă хĕрсе кайнă. Вырăнсен чи, формальнă пĕрлешнĕ организацисенче час-часах съезд çинчен доклад тăвакансем иккĕн пулнă: пĕри — большевиксенчен, теприменьшевиксенчен. Икĕ çулйĕре сӳтсе-йавнă хыççăн организаци членĕсен ытларах пайĕ нумай чухне большевиксен йенне тăнă.

Большевиксен тĕреслĕхне пурнăç ытларах та ытларах кăтартса панă. IV-мĕш съездра суйланă меньшевикла Тĕп Комитет хăйĕн оппортунисăмне, массăсен революцилĕ кĕрешӳне йертсе пыма пачах пултарайманнине ытларах та ытларах палăртнă. 1906 çулта çулла тата кĕркунне массăсен революцилĕ кĕрешĕвĕ çĕнĕрен вăйланнă. Кронштадтра тата Свеаборгра матроссем восстани тунă, хресченсен помещиксене хирĕç кĕрешĕвĕ хĕрсе кайнă. Меньшевикла Тĕп Комитет оппортунисла лозунгсем парса тăнă, массăсем вăл лозунгсем хыççăн кайман.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Ишек шкулĕнче

Ишек шкулĕнчи (Ишлей р.) комсомолĕцсемпе учительсем комсомол 20 çул тултарнă куна уйавлама хатĕрленеççĕ. Драмкружок спектакль лартма хатĕрленет, хор кружокĕнче комсомол çинчен çĕнĕ йурăсем вĕренеççĕ.

Шкулта октябрйатсен уйрăм хорĕ пур, вĕсем те тĕрлĕ йурăсем вĕренеççĕ тата çтена хаçачĕ кăлараççĕ.

Комсомолĕцсемпе çамрăксем комсомол 20 çул тултарнине „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе кĕтсе илеççĕ. Комсомолĕцсен иртнĕ пухăвĕнче 4 çамрăка ПСÇЛКС членне илчĕç.

А. Ильухин.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммуниссен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ

Октябĕрĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарти йалхуçалăх институтĕнче, йалхуçалăх рабфакĕнче тата колхоз председательсен курсĕнче вĕренекен коммуниссен пĕрлешӳлĕ пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ йышăннă решенине сӳтсе-йаврĕ. Оçипăвă йулташ кун çинчен пысăк доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче ПСК(б)П Чăваш организацинчи тăшманла елементсене тĕппипех пĕтерес ĕçе ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ предатель Г. И. Иванов чарса пыни тата вăл хăйне майлă ĕçлекен работниксене пысăк вырăнсене лартни çинчен каларĕ. Уйрăмăнах комсомол организаципе парти организаци ретне хĕсĕнсе кĕнĕ халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене пĕтерес ĕç çителĕксĕр пынине кăтартса пачĕ.

Пренире тухса калакансем чылай пулчĕç. Вĕсем ĕçри çитменлĕхсене, ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренме хатĕрленесси çителĕксĕр пулса пынине палартрĕç. Колхоз председательсен курсĕнче вĕренекен курсантсем хушшинче ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне вĕренме хатĕрленессипе нимĕн те тумаççĕ. Ку ĕçе тытăнманпа пĕрех.

Йалхуçалăх рабфакĕн директорĕ пулнă Йурйĕв тăшмансем майлă ĕçлесе пынă. Вăл работниксене [illegible] вырăнсĕр ĕçрен хăварнă. Самокритикăна путарнă. Шкулти столовăй заведуйушчине 2—3 хутчен улăштарса лартнă. Работниксене вырăнсăр йатлана. Хăйĕн майлисене ырланă. Анчах та Йурйĕвăн ирсĕр ĕçĕсене хăшпĕр работниксем пытарса пурăннă. Çапах та партипе комсомол организацийĕ тăрăшса ĕçленипе ăна тăрă шыв çине кăларнă,—тет Иванов йулташ.

Тухса каласакансем хальхи вăхăтра парти пуçламĕш организаципе комсомол тата профсойуз организацийĕсем çителĕклĕ ĕçлесе пыманни çинчен каларĕç. Самокритикăпа критикăна анлăн сарса, хăшпĕр работниксем начар ĕçлени çинчен çутатрĕç. Халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене пĕтерес ĕç йенĕпе партипе комсомол тата профсойуз организацийĕсем нимĕн те ĕçлемени çинчен каларĕç.

Тухса калаçакансем комсомолăн йертсе пыракан органĕсен суйлавне тата ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йубилейе хатĕрленессипе ĕç мĕнле пыни çинчен пĕр сăмах та шарламарĕç. Ĕçе пачах манаçа хăварнă пек турĕç.

Йулашкинчен пуху ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ йышăннă решенине ырласа, малашне партипе комсомол тата профсойуз организацисен ĕçĕсене аванлатма, уйрăмăнах халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене пĕтерессипе ĕçлеме, ĕçри çитменлĕхсене пĕтересси, пур ĕçсене те лайăхлатса пыма йышăнса хăварчĕ.

Й. Çигайĕв.

Суйлав пухăвĕ активлăн иртрĕ

Типографи çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацийĕ Шупашкар хулинче чи малтан, октябĕрĕн 15—16-мĕш кунĕсенче суйлав пухăвне ирттерчĕ.

Пухура тухса калакан комсомолĕцсем малтанхи комитета, унăн çекретарне Йегорăв йулташа, ĕçе йертсе пыманшăн хытă йатларĕç. Пурĕ 9 комсомолĕц тухса калаçрĕç.

Мĕншĕн критиклерĕç-ха комсомолĕцсем малтанхи комитета?

Мĕншĕн тесен комитет, тӳррипе каласан, комсомолăн пуçламĕш организацине сӳнсе ларасси патне илсе çитернĕ. Отчот тапхăрĕ хушшинче пурĕ те 8 пуху çеç пулнă, комсомол йышĕ ӳсмен. Политвĕренӳ ĕçĕ сезонлă пулса пынă.

Комсомол комитечĕн çекретарĕ пулнă Йегорăв çамрăк рабочисем пурăнакан общежитисене пачах та пырса курман.

Пренире тухса калакан çамрăк комсомолĕц Краснов йулташ хăйĕн шухăшне çăннипе каласа пачĕ.

— Епĕ çамрăк комсомолĕц. Комсомол ретне кĕнĕренпе çулталăк та çитмен-ха,—тет вăл.—Анчах мĕн пачĕ-ха мана комсомол? Мĕнле уса кӳтĕм епĕ комсомол валли? Тӳррипе каласан, мана комсомол организацийĕ ним те памарĕ, епĕ хам та нимĕн те тăваймарăм. Çак тарана çитсе те епĕ ĕлĕкхи киревсĕр йăласенчен хăтăлса çитеймерĕм-ха, халĕ те пăртак чарусăрланатăп. Манăн пуш вăхăт чылай, а комсомол ĕçĕсене мана хутшăнтарма никам та шутламан.

Тухса каланă йулташсем типографи çумĕнчи парторганизаци комсомол организацине çителĕклĕ пулăшса пыманнине палăртрĕç. Çавнашкалах комсомол хула комитечĕ те отчот тапхăрĕ хушшинче типографи организацине пĕр хут çеç хăйĕн инструкторне йанă.

Политшкул валли пропагандист тупса паман.

Пуху пĕр шухăшлă пулса çĕнĕ комитет суйласа хăварчĕ. Çĕнĕ комитет Киçельов йулташа çекретаре суйларĕ. Унăн пĕрремĕш заместительне çамрăк комсомолкăна Логунова йулташа суйларĕç.

И. М.

Хуçасăр автомашина

Шупашкарти „Промкоопстрой" ертел правленийĕ иртнĕ çулта автомашина туйаннăччĕ. Анчах машинăпа нумайах та усă курай марĕç, скатсем çук пирки вăл пăрахăçа тухрĕ. Кăçал машинă гараж çук пирки çăвĕпех ирĕкре тутăхса ларчĕ.

Ыйтас килет: ертел правленийĕ машинăна малашне те ирĕкре йапăхтарса лартма шутлать-ши?

Н. Музыкантăв.

Почтальйон-агитатăр

...Йанвар уйăхĕнчи шăрглама сивĕ те, кĕркуннехи йĕпе, çăмарла çанталăк та унăн хăрушă мар. Сăран сумкăна хаçатсем тултарнă çынна ир те каç та, хиспелĕ хăнана кĕтнĕ пек кĕтетĕн. Вăл сана хаçат йе çыру тыттарать те сывпуллашса малалла кайать.

— Пайанхи хаçатсем çинче мĕн çыраççĕ?—тесе ыйтаççĕ вара унтан хирĕç пулнă çынсем. Вăл хăйне ыйту пана çынсене кĕскен те пулин ответ паратех.

Ку вăл Анат-Сăнарти (Йетĕрне р.) „Çĕнĕ çул" колхозăн почтальйонĕ Степан Важорăв пулать. Анат-Сăнар йалĕнче пĕтĕмпе 81 хуçалăх шутланать. Вĕсем кашнийех хаçат-журнал çыранса илеççĕ. Важорăв йулташ тăрăшса ĕçленипе ку йала пĕтĕмпе 180 екземпльар тĕрлĕрен хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Вăл ку ĕçре 1929 çултанпах çӳрет. Подписчиксене хаçат-журналсем йаланах вăхăтра леçсе парать. Ăна çынсем мухтаççĕ, йуратаççĕ.

— Аван çын вăл. Хаçатсене пĕр номĕр те çухатмасть,—теççĕ вара ун çинчен йалти çынсем.

Важорăв йулташ хаçатсем çеç валеçмест. Çав хушăрах вăл агитатăр пулса ĕçлет. ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă вăхăтра ĕççыннисене суйлав саккунĕпе паллаштарас тĕлĕшпе нумай ĕçлерĕ. Халĕ вăл ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене вĕрентес ĕçе организацилене. Колхозниксене Чăваш парторганизацин облăçри XIX-мĕш конференцин ĕçĕсем çинчен ăнлантарса парать. Колхозниксем облăçри партконференцин решенийĕсене ырлаççĕ.

Важорăв йулташ хăйĕн пĕлӳне хăпартассишĕн те нумай тăрăшать. Хăй вăл 7 тĕслĕ хаçат-журнал çыранса илет. Çыхăну ĕçĕнче ĕçлекенсен заочнăй курсĕнче вĕренет.

Почтальйон пулса ĕçленĕ хушăрах колхозра çтена хаçачĕ кăларать.

Важорăвăн паха ĕçĕсене курă, ăна районри çыхăну пайĕ çулсеренех премисем пана.

Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса, Важорăв кашни икĕ киле 5 екземпльартан кайа мар хаçат-журнал сарма обйазательствă илнĕ, хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерме сăмах пана. Çаксене Важорăв пурнăçа кĕртетех.

Ник. Цветков.
Ваç. Крылов.

Колхозри хаçат

Колцовкăри (Вăрнар р.) Сталин [illegible] колхозра [illegible]мĕш çул ĕнтĕ «Сталинец» йатлă хаçат тухса тăрать. Çав хаçатăн редакцинче те, типографинче те колхозниксемех ĕçлеççĕ. Хаçат 240 екземпльар саланать. «Сталинец» хаçат колхозри пуйан та культурăлă пурнăçшăн кĕрешет, колхозри чаплă çитĕнӳсене çутатса парать, çав вăхăтрах çитменлĕхсене кăтартса, вĕсене вăхăтра пĕтерме пулăшать. Хаçат пĕр çитменлĕх çинчен çырсан, ăна вĕçне çитерессишĕн кĕрешет.

Колцовкă колхозĕ республикăра, çавнашкалах Совет Сойузĕнче те паллă колхозсенчен пĕри пулса тăчĕ. «Сталинец» хаçат Талайĕв, Храмăв, Оленин колхозниксем йертсе пыракан бригадăсем тăрăшса ĕçленипе кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 18—20 центнĕр тĕш[illegible] çутатса парать. Çакăнпа пĕрлех вăл колхозра выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленесси çинчен çырать.

«Сталинец» хаçата пăхса тухсан, Колцовкă колхозĕн çитĕнĕвĕсене, колхозниксем мĕнле ĕçленине курма пулать. Сталин йачĕпе тăракан колхоз кăçалхи йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Хаљ тупăша ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама хатĕрленеççĕ.

Колцовкăра кашни килте електричествă çути çутатать, радио пур. Калаçакан кинотеатр çӳрчĕ ĕçлет. Унтах библиотекă. Вăтă колхозниксем те библиотекăран тĕрлĕрен кĕнекесем илсе вулаççĕ. Клубра колхоз çамрăкĕсем хăйсен пĕлӳне ӳстереççĕ, ташлама, йурлама вĕренеççĕ.

Д. Обофорăв.

Вулав çурчĕсен ăмăртăвĕ

Çак кунсенче Йелчĕк районĕнчи çутĕç пайĕ вулав çурчĕсен пуçлăхĕсемпе культçекци руководительсене пухса Канашлу туса ирттерчĕ. Канашлура вулав çурчĕсем Октябĕр уйавне хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен, çитĕннисен хушшинчи хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕç çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕсемпе культçекци руководителĕсем канашлура тухса калаçнинчен, районри чылай йалсенче политикăлă-массăлă ĕç начар пулса пыни, Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту çинчен колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарас йенĕпе вулав çурчĕсем çителĕксĕр ĕçлени палăрчĕ. Кунтах хăшпĕр вулав çурчĕсем чăннипех тăрăшса ĕçлени те курăнчĕ.

Тăрăм йалĕнче вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса Воробйова, культçекци руководителĕ Филиппăв йулташсем ĕçлеççĕ. Вĕсем йалта политикăлă-массăлă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартнă.

Канашлу вулав çурчĕсемпе культçекци руководителĕсен Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, йалсенче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатма йышăнса хăварчĕ. Патрекелпе Аслă Йелчĕк, Тăрăмпа Тăрмăш, Ентепепе Кĕçĕн Тайапа тата ытти вулав çурчĕсем те йалсенче культмассăлă ĕçе хăпартассипе ăмăртăва тухрĕç.

Гер. Иванов.
Мих. Воронцов.

Оборонă ĕçĕ— комсомолĕцăн чи çывăх ĕçĕ

Совет çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене çирĕплетес ĕçре комсомол Ленин—Сталин партине активлăн пулăшать. Çак вăл—комсомолăн чи мухтавлă традицийĕсенчен пĕри пулать. Вăл традици граждăн вăрçи вăхăтĕнчех те, унчухне комсомола кĕрес тени бойец пулса фронта каймалине пĕлтернĕ хăрушă çулсенчех çуралнă. Ленинла-сталинла комсомол Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе уйăрлми çыхăнса тăрать. Çак çыхăнăва вăл интервентсемпе тата белогвардейĕцсемпе çапăçнă çĕрте вилнĕ хăйĕн чи лайăх ывăлĕсен йунĕпе çирĕплетнĕ.

Комсомол вунултă çул хушши ĕнтĕ аслă совет державĕн тинĕс флочĕн шефĕ пулса тăрать. Çичĕ çул ытла вăл ССР Сойузĕн сывлăш-çар вăйĕсене шефа илсе тăрать. Пиншер мухтавлă сталинла соколсем, пиншер хăйула та паттăр морйаксем, пирĕн никам çĕнтерейми авиацин, пирĕн хăватлă тинĕс флочĕн мухтавлă командирĕсене пиншерĕн пачĕ хăйĕн тăван çĕршывне комсомол. Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çарпа Флот речĕсенче çурмĕлйун комсомолĕц шутланать.

«Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕнчи комсомолĕцсем—вĕсем—ĕççыннисен государствин оборонин цит чаплă, ылттăн фончĕ пулса тăрать» (К.Е. Ворошилăв).

Комсомол программи хĕçпăшаллă вăйсене тĕреклетсе сарас ĕçре совет государствине пулăшассине «комсомолăн чи кирлĕ обйазаннăçĕ» вырăнне хурса палăртать. Ку программăра çапла каланă: «Кашни комсомолĕц Хĕрлĕ Çара тата Флота кайиччен тĕл перекен пулма вĕрентĕр, çар ĕçĕн пĕр-пĕр ăсталăхне вĕрентĕр тесе, ПСÇЛКС çамрăксем хушшинче çар пĕлĕвĕсене сарать, оборонă тĕлĕшпе ĕçлекен обшчествăлă организацисен ĕçĕсене активлăн хутшăнать». Хĕрлĕ Çара кайакан призывниксене хатĕрлесси, сойузра тăракан тата сойузра тăман çамрăксене çар ĕçне вĕрентесси—тăван çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетес тĕлĕшпе йаланах комсомолăн чи тĕп ĕçĕ вырăнĕнче шутланнă. Комсомол социалисăм çĕршывĕнчи кашни çамрăк çын çар ĕçне вĕрентĕр тесе тăрăшать.

Комсомолшăн çар ĕçĕ вăл—унăн пурнăçĕнчи мухтавлă страница пулса тăрать. Çар ĕçне хутран-ситрен вĕренкеленинчен, çар ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем тукаланинчен комсомол çамрăксене тăтăшах çар ĕçне вĕрентесси çине куçрĕ. 1932—1936 çулсенче комсомол организацисем çар техникин екзамĕнне ăнăççăр мар туса ирттерчĕç. Екзамĕн комсомол членĕсем хушшинче çар пĕлĕвĕсене сарма пулăшрĕ. Хăйĕн Х-мĕш съезĕ тĕлне комсомол Осоавиахимпа пĕрле çĕршер пин ворошилăвла стрелоксем хатĕрлерĕ. Нумай йулташсем ПВХО нормисене пана, лашана пăхас ĕçе вĕрентнĕ тата ыт. те. Вуншар пин комсомолĕцсем топографине, авиамотора пĕлни çинчен, планĕрпа вĕçме пĕлни çинчен екзамĕн пана.

Çав çулсенчех ленинла-сталинла комсомол çамрăксем хушшинче авиаци спортне аталантарас ĕçе пуçарса йачĕ. Комсомол пуçарнипе пĕтĕм çĕршывĕпе аероклубсем тума пуçларĕç, вăл клубсенче рабочи тата колхоз çамрăкĕсем производствăран уйăрăлмасăрах самольотсем çинче вĕçме вĕренеççĕ. ССР Сойузĕнче парашутисăм аталанăвĕшĕн—комсомол тава тивĕçлĕ. Пирĕн патра парашутисăм пысăккăн сарăлса кайнă, ун пеккине тĕнчери нихăш çĕршыв та курман-ха.

Анчах çар техникин екзамĕнĕн итогĕсем, совет парашутисĕсен çитĕнĕвĕсем, комсомолĕц-пилотсен пирвайхи ушкăнĕсем Хĕрлĕ Çарăн, авиаципе флотăн ӳссе пыракан ыйтăвĕсемшĕн çителĕклĕ пулаймарĕç. Çавăнпа та комсомолăн Х-мĕш съезĕ кашни комсомоĕц умне çакăн пек задачă лартрĕ—„иккĕмĕш професçине" туйанмала, çар ĕçĕн пĕр-пĕр отраçлин специалисĕ пулмалах, терĕ.

ПСÇЛКС XX çул тултарнă йатпа аероклубсем тунă ăмăрту вăхăтĕнче пиншер комсомолĕц-учльотсем, пилотсем, техниксем, инструктăрсем, парашутис-спортсменсем пулма срукченех зачотсем пачĕç. Нумай аероклубсенчи комсомолĕцсем авиаци специалисĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пана заданине срукченех пурнăça кĕртнĕ. Ленинград облăçĕнчи аероклубсем (Тосненскри, Чудăвскри, Новгородри, Ленинград хулинчи), çавăн пекех тата Владимирскри, Витебскри, Саранскри, Кутаисри тата Мускав хулинчи Октябĕрски районĕнчи аероклубсем малта пыраççĕ. Вĕсем авиакадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пана заданине икĕ уйăх малтан пурнăça кĕртнĕ. Вăл аероклубсенчи комсомолĕцсем, çамрăксем зачотсене „отлично" та „хорошо" пана.

Анчах ĕç пур çĕрте те çакăн пек лайăх пулса пымасть. Авиаци специалисĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе Украинăри (Сталински тата Ворошилăвград облăçĕнчи) Осоавиахимпа комсомол организацисем, çавăн пекех тата Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи, Казахстанри, Армениri, Челябинскпа Калинин облăçĕсенчи аероклубсем кайа йулса пыраççĕ. Çав аероклубсенче командирсемпе политработниксен тата льотчиксемпе техниксен составне плана пурнăça кĕртес ĕçе çителĕксĕр мобилизацилене, массăлă-политикăлă ĕçе кирлĕ пек сарса йаман.

Чылай аероклубсенче пилотсене тренировкă тутарас тĕлĕшпе ĕç йапăх пырать. Çак ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхманнишĕн Осоавиахим Тĕп Советне критиклени тĕрĕс. Комсомолпа Осоавиахим организацийĕсен задачи вăл — авиацин пур специалисĕсене те хатĕрлес тĕлĕшпе пана заданине пурнăça кĕртмеле тăвасси, пур аероклубсенче те пилотсен тренировкине организацилесси пулать. Пирĕн çĕршывра тăтăшах тренировкă туса пыманни пĕр пилот-льотчик та ан пултăр. Çакна тума материаллă чаççемпе инструктăрсен кадрĕсем çителĕклĕ. Комсомол организацисен аероклубсен çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ çĕрте Осоавиахима пулăшмала: аероклубсенчи группăсене чи лайăх комсомолĕцсенчен пухмала, политикăлă ĕçе çĕклемеле, аероклубсенче дисциплинăна тата йĕркелĕхе лайăх лартмала.

Кăçалхи август-çентябĕр уйăхĕсенче туса иртернĕ ССР Сойузĕнчи халăхсен стрелковăй спартакиади совет стрелокĕсем чылай çитĕнӳсем тунине кăтартса пачĕ. Пĕтĕм тĕнчери заочнăй ăмăртура пирĕн стрелоксем, вĕсенчен ытларахăш пайĕ комсомолĕцсем, чаплă çĕнтерӳ тунă. Ăмăртура тĕрлĕ çĕршывсенчен 205 командă пулнă, вĕсенчен 11-шне ССРС хăй тăратнă. Малтанхи вырăнсене улттăшне совет командисем илнĕ. Советăн ытти пилĕк команди вунулттăран кайа мăр вырăнсене йышăннă.

Массăлă стрелковăй спорта сарса пырас çĕрте Осоавиахима пулăшса, комсомол организацисен стрелковăй шкул-клубсем тăвасси çине хыттăн çавăрăнса пăхмала. Вĕсенче çамрăксем винтовкăран тата пулеметран снайпĕрла перес исскуствăна вĕренччĕр.

Мускавра, Ленинградра, Белоруççире, Украинăра Осоавиахимăн нумай организацийĕсенче интереслă тата çĕршывăн оборонă пултарулăхне тĕреклетессишĕн усăлă йухăм сарса пыраççĕ. ССРС Верховнăй Совет, сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем вăхăтĕнчи агитацилĕ ĕçĕн опычĕпе усă курса, Осоавиахимра тăракан комсомолĕцсемпе активиссем ĕççыннисене противогазпа паллаштарма тата сывлăшран пырса тапăннине пĕлтерсен хăйсене мĕнле тыткаламали правилăсемпе паллаштарма, сывлăшран тапăннă хыççăн пулнă сийенсемпе кĕрешме вĕрентме тесе хватерсем тата обшчежитисем тăрăх тухса кайнă. Çак агитатăрсен опычĕпе пур комсомолĕцсемпе Осоавиахим членĕсен те усă курмала. Хамăр çĕршыври кашни гражданинăнах сывлăшри тапăнуран тата химилĕ тапăнуран хӳтленме пĕлмеле.

Комсомолĕцсен оборонă ĕçне вĕреннĕ çĕрти çитĕнĕвĕсем çинчен вĕçĕмсĕр пысăккăн сарăлса выртакан совет çĕршывĕн пур кĕтесĕсенчен те сведенисем пыраççĕ. Комсомольск хулинчи машинăсем тăвакан савăтри цехсенчен пĕринче пилотсемпе штурмансен кружокĕсене тунă. Комсомолăн Хабаровск хула комитечĕ медицина çестрисен курсне организациленĕ. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чи пысăк предприйатисенчен пĕринче — Микойан йачĕпе тăракан масложиркомбинатра 139 комсомолĕцран 56-шĕ—льотчиксем, химиксем, снайпĕрсем, разведчиксем шутланаççĕ. Вĕсем çак специальнăççене савăтра ĕçленĕ çĕртех илнĕ.

Комсомолпа Осоавиахим организацисем оборонă ĕçне çамрăксем хушшинче пит нумай çĕнĕ формăсемпе туса пыраççĕ. Смоленскра комсомолăн хула комитечĕпе Осоавиахимăн облăçри совечĕ çентябĕрĕн 30-мĕшĕнче «Оборона Смоленска» текен çар тактикăлă вăйă туса ирттернĕ, унта 7 пин çынна йахăн хутшăннă. Тактикăлă вăйă тата похода Мускаври университетри 2.900 студентсем, аспирантсем тата аслăлăх работникĕсем те туса ирттернĕ. Партин Мускав хулинчи Тагански райкомĕ пуçарнипе çак кунсенче противогазсем тăхăнса поход тунă, вăл походра 14 пин çын пулнă.

Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусенче пулнă бойецсен çырăвне ответ парса, Ворошилăвградри пăравуссем тăвакан савăтри рабочисем пуçарнипе Осоавиахим организацийĕсен пĕтĕм Сойузри ăмăртăвĕ пуçланнă.

Пирĕн йуратнă учитель тата çулпуç аслă Сталин пĕтĕм совет халăхне мобилизацилĕ хатĕр тăма чĕнет. Çак вăл тăван çĕршыври кашни çамрăк гражданинах çар ĕçне тăрăшса, куллен вĕренме хушать. Кашни комсомол организацийĕн тĕп ĕçĕ пулса тăраканни вăл—кашни комсомолĕцăннах çар специальнăçĕ пулмала тăвасси пулать. Кашни комсомолĕцăн йе льотчик, йе танкис, йе артиллерис, йе пулеметчик, йе морйак пулмала.

Парти, правительствă тата халăх Осоавиахима пит пысăк ĕç шанса пана—совет гражданĕсене хăйсен социалисăмлă тăван çĕршывне хӳтлеме хатĕрлемеле. Вĕсем Осоавиахима материаллă пысăк база пана. Осоавиахим организацисен тăшмансемпе вĕсен агĕнчĕсем тата социалисăм ĕçĕшĕн йут етемсем пырса тĕкĕнмеле пултармала мар пулмала. Хальхинчен тата лайăхрах ĕçлеме Осоавиахимăн пур майсем те пур.

Кашни комсомолĕцăн тата комсомол организацийĕсен пурин те чи çывăх ĕçĕ—Осоавиахима тĕреклетесси—совет халăхĕн оборонă тĕлĕшĕнчи массăлă организацине тĕреклетесси пулать.

Комбриг П. ГОРШЕНИН,
ССРС Осоавиахим Тĕп
Совечĕн председателĕ.

Çул хĕрринчи чул патĕнче шухăшласа тăни.
К. Теодорович ӳкерчĕкĕ („Пресsклише").

Германи Чехословакине хăйĕн çурмаколонийĕ тăвасшăн

Октябĕрĕн 15-мĕшĕнче Чехословакин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хвалковский Германинчен таврăннă. Вăл унта Германипе Чехословаки хушшинчи хутшăнусем çинчен тата Чехословакипе Венгри хушшинче тухнă хирĕçӳве мĕнле майпа татасси çинчен Гитлĕрпа тата Риббентроппа калаçнă.

Журналиссем, Германи Чехословаки умне чылай требованисем лартнине, вăл требованисене пурнăçа кĕртсен Чехословаки Германин çурмаколонийĕ пулса тăма пултарнине палăртаççĕ. Акă, сăмахран, Германи „нацилĕ çирĕп правительствă" (урăхла каласан, фашисла диктатурă) туса хума, коммунисла партине салатса йама, Германипе Австри емигранчĕсене таврса пама, çар промышленнăçне вăйсăрлатма тата ыт. хушнă.

(ТАСС).

Словакире фашисла йĕрке тунă

ПРАГА, октябрĕн 15-мĕш. Словакин автономлă правительстви „нимĕççен парти" текенскерĕн лидĕрне—Кармазина, Германи фашисăмĕн Словакири тата Закарпат Украининчи агĕнчĕ пулса тăраканскерне, „государствăн нимĕç халăхĕсен йенĕпе ĕçлекен çекретарне" лартнă.

Кармазин çĕнĕ вырăна ларнă хыççăнах Словаки территоринче Германи, Итали тата Польшă фашисĕсен кĕнекисемпе хаçачĕсене сутмала тунă.

(ТАСС).

Венгрипе Чехословаки чикинчи лару-тăру

Чехословакипе Венгри чиккинче каллех хĕçпăшаллă çапăçусем пулса иртнĕ. Венгрин чикĕ хĕрринчи чаçĕсене чылайах вăйлатнă. Прагă хулинче, Венгри правительстви пĕтĕмĕшлĕ мобилизаци туса ирттерме йышăннă, тесе сăмах сарнă. Правительствăна çывăх тăракан „Словенска политика" хаçат малашне провокацилĕ ĕçсене чарса лартмали çинчен Венгрине астутарса çырнă статйа пичетлесе кăларнă.

(ТАСС).

Германи тытса илнĕ районсенчи пăлханусем

Чехословакин Германи тытса илнĕ чылай районĕсенче пысăк пăлханусем пуçланса кайнă. Çавăн пирки Свиновпа (Çурçĕр Моравви) Моравскайа Острава хушшинче çӳрессине йăлтах чарса лартнă. Çавăн пекех çĕрле чикĕ хĕрринче кĕпер урлă каçса çӳреме те чарнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Октябĕрĕн 15-мĕшĕнче хĕвелтухăç фронтĕнчи Ебро шывĕн районĕнче çĕр çинчи вăйсен активлăхĕ пысăках пулман. Çав кунах кăнтăрлаччен пулнă сывлăшри çапăçура республикă самолйочĕсем Италипе Германин икĕ самолйотне персе антарнă. Республикă авиацин пĕр самолйот пĕтнĕ. Лйотчик парашӳтпа сиксе аннă. Каç пулас умĕн республикă самолйочĕсем Германин тата темиçе самолйотне персе антарнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Ыран октябĕрĕн 15-мĕшĕ тенĕ чух çĕрле, Итали самолйочĕсем Барçелонăпа Валенçи çине тата Каталони патĕнчи çыран хĕрринчи çынсем пурăнакан хăшпĕр пунктсем çине бомбăсем пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур.

(ТАСС).

Фашисла авиацин Испанири çухатăвĕ

Йулашки ернесенче Испани фрончĕсенче республикă истребительĕсемпе зенитлă батарейĕсем Италипе Германин 20 самолйотне персе антарнă. Республикă авиацийĕ çав вăхăт хушшинче икĕ самолйот çухатнă. Икĕ самолйотăн та лйотчикĕсем парашӳтпа сиксе çăлăннă.

(ТАСС).

Фашисла Германин чăн-чăн хуçисем

Чехословаки журналĕсенчен пĕринче, фашисла Германин чăн-чăн хуçисем камсем пулса тăнине кăтартса паракан статйа пичетлесе кăларнă.

Хальхи вăхăтра Германире пĕтĕм ĕçсене чăннипе туса пыракан шултра капиталиссен пысăк мар ушкăнĕ—190 тĕрлĕ акционерлă обществăсене пĕрлешнĕ, çĕршыври пĕтĕм капиталран çуррине йаха хăйсен аллинче тытса тăракан промышленниксемпе банкирсем пулса тăраççĕ. Çак вуншар промышленнăç тата банксен королĕсем пуçпулса тăракан обществăсем йăвăр тата çăмăл индустрире хуçа пулса тăраççĕ, пысăк банксемпе пĕтĕм хуçалăхăн 4 пайĕнчен 3 пайне пăхса тăраççĕ.

Статйа çак пĕрлешӳсен капиталĕ пысăккăн ӳссе пынине кăтартса панă. Крупп, Отто Вольф тата ытти çавсем пек шултра пĕрлешӳсем, гитлĕрла правительствă активлăн пулăшса пынипе, нимĕнле пĕрлешӳве те хутшăнман вăтам тата вак предприйатисене йухăнтарса, вĕсен шучĕпе вăйланса пыраççĕ. Уйрăмах Германи („арийские") концернисем йеврейсен тата Австри фермисемпе предприйатисене йухăнтарса, вĕсен шучĕпе хăвăрттăн ӳссе пыраççĕ.

Германире концернсене вăйлатса пуйанлатмали майсенчен пĕри вăл—фашисла правительствă парса тăракан çар заказĕсем пулса тăраççĕ. Кунсăр пуçне гитлĕрла правительствă шултра капиталиссен пĕрлешӳвĕсене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕпе пысăк пулăшу парса тăрат т. ыт. те.

Çапах та, тесе палăртат хаçат, Германири халăхăн, чăн пирвайах рабочи класăн ĕнси çинче пуйса пыни капиталисла аккулсемшĕн çителĕксĕр, вĕсем унпа кăна тăранмаççĕ. Вĕсем Гитлĕртан çĕнĕ рынăксемпе пуйанлăхсем, çĕнĕ территорисем ыйтаççĕ. Трестсемпе пĕрлешӳсем хăйсен ĕмĕтне Чехословаки çине хунă, вĕсем ун çине выçкашкăрла пăхаççĕ. Гитлĕр çавсен ĕмĕтне пула ĕнтĕ, хăйĕн хĕçпăшалне Чехословаки çинелле тĕллерĕ. Халĕ ĕнтĕ капиталиссен ĕмĕтсĕр куçĕсем Прагăран та, Балканран та иртсе кайса, Багдатпа Иран çинеле, Совет Украини çинеле, Урал çинеле пăхаççĕ...

„Çавăнпа та ĕнтĕ,—тесе çырнă статйара,—Гитлĕра чикĕсене пĕрин хыççăн теприне пĕтерсе пыма хушнă; ĕнер—вăл Австри пулнă, пайан—Чехословаки, ыран—тата ыттисем пулмала.

Капиталисла вăрăхурахсен ушкăнĕн услаĕ мĕн чухлĕ ӳссе пырат, тĕнче çинчи çĕнĕ вăрçа пĕлĕчĕсем çавăн чухлĕ çăраланса пыраççĕ".

(ТАСС).

М. М. Блюменталь-Тамаринă вилнĕ

Октябĕрĕн 16-мĕшĕнче 17 сехет те 05 минутра, Мускавра Кремль пульницинче, ССР Сойузĕн халăх артистки-орденоносĕц Марийă Михайлăвнă Блюменталь-Тамаринă вилнĕ.

М. М. Блюменталь-Тамаринă 80 çулта, йăвăр чир хыççăн вилнĕ.

1925 çулта Марийă Михайлăвнăна РСФСР тава тивĕçлĕ артистки йатне панă, 1928 çулта—РСФСР халăх артистки йатне, 1936 çулта—ССРС халăх артистки йатне панă. Блюменталь-Тамаринă вырăс театрне аталантарас тĕлĕшпе тунă паллă та чаплă ĕçсене паллă туса, правительствă ăна Ленин орденĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалав орденĕ панă.

Халăх артистки сценă ĕçне çур ĕмĕр ытла панă.

Сывлăхĕ начар пулнă пулсан та, вăл общĕствăлла ĕçе активлăн хутшăнса ĕçленĕ, ПСК(б)П сочувствуйушчийĕсен группине кĕнĕ, 1934 çулта ăна Мускав советне депутата суйланă, вăл Советсен Пĕтĕм Российăри Чрезвычайлă XVII-мĕш сйесĕн делегачĕ пулнă.

(ТАСС).

Вăрмăн хатĕрлевĕ

Турттарасси йулса пырат

ÇĔМĔРЛЕ. Механизациленĕ вăрманпункчĕ виççĕмĕш квартăл планне касса хатĕрлессипе 140,3 процент тултарнă пулсан, турттарса кăларассипе пĕтĕмпе те 66,1 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Мĕнрен килет-ха турттарассипе ĕççем начар пыни? Вăрманпункт руководителĕсем ĕç тавра массăна мобилизацилемен, вĕсем хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе сарса пыман. Ĕç вăйĕ çителĕксĕр. Çавна пула Кăмаша çулĕ çинчи трактăриссем час-часах крийажсене хăйсем тийеççĕ. Паллах, капла ĕçленипе ĕç тухăçлăхне хăпартма çук. Трактăрсемпе пуринпе те усă курмаççĕ. Чылай вăхăт хушши ĕнтĕ пайĕсем çук пирки 4 трактăр ĕçлемесĕр лараççĕ. Вăрманпункт директăрĕ Феклистăв й. машинă пайĕсене тупассипе телеграммăсем çырса ларнипех ĕç пулчĕ теме пăхат, кирлĕ ĕçсене васкаса туни куранмаст. Стаханăвĕçсен лайăх опычĕсене пĕтĕм рабочисем хушшине сарас тĕлĕшпе те начар ĕçлеççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вăрманпунктĕнче 768 рабочирен стаханăвĕçсем 26 çын çеç.

Хĕл кунĕсем çывхарса килеççĕ. Хĕллехи вăхăтра та вăрманта ĕç ăнăçулăн пытăр тесен пурăнмали çуртсене, хĕрлĕ кĕтессене халех йусамала, инструментсем хатĕрлемеле. Анчах хальхи вăхăтра хĕллене хатĕрленесси йапăх пырат. Столовăй çуртне чылайранпах йусаççĕ, çапах та хатĕр мар. Бараксене йусама тытăнман. Хĕрлĕ кĕтессем те чылайĕшĕ йĕркелĕ мар, йусамала. Рабочисем валли хаçат-журналсем çителĕклĕ таран çыранман. Профсойуз организацийĕ (Оçипăв, Алендейĕв) ку тĕлĕшпе „вăхăт пур" тесе пĕр васкамасăр, хуллен ĕçлеççĕ.

П. Йавский.

Çамрăк техниксен парнисем

Шупашкар хулинчи ачасен техникă станцинчи çамрăк авиамоделиссем ПССЛКС 20 çул тултарнă уйав тĕлне тăван çĕршыв-аннемĕр валли интереслă парнесем хатĕрлеççĕ. 2-мĕш №-лĕ шкулта вĕренекен Борис Борков бензинпа ĕçлекен моторлă самолйотăн моделне тунă; 3-мĕш №-лĕ шкулта 8-мĕш класра вĕренекен Саперăв тата 7-мĕш класра вĕренекен Бессонăв хăвăрт вĕçекен самолйот моделĕсене тăвассипе ĕçлеççĕ. Авиамоделсем тăвассипе темиçе çул ĕçлекен Пинт Винйе хăйĕн конструкципе самолйот моделне тăват.

Çамрăк фотолюбительсем комсомолăн чаплă йубилейĕ тĕлне хăйсен фото-ӳкерчĕкĕсенчен пысăк альбом хатĕрлеççĕ.

Учительсене 150 пин тенкĕ кивçен укçа

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йалти учительсене харпăр-хăйне валли çуртсем тума 10 мĕлйун тенкĕ нумай срукла кивçен укçа пама йышăннă. Вăл хисепрен Чăваш республикинчи учительсем валли 150 пин тенкĕ уйăрнă.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ районсенчи çутĕç пайĕсене çак кивçен укçана учительсене парас тĕлĕшпе кăтартусем йанă. Вăл укçана 4 пин тенкĕрен ытла мар 5 çул хушшинче тӳлесе татмала параççĕ. Зайавкăсене районри çутĕç пайĕпе вырăнти профсойуз организацине памала, ĕçе вĕсем татса параççĕ.

Йалпо председательĕсен курсĕ

Мускавра, Центросойуз çумĕнче, хăйсен ĕçне отличнă туса пыракан йалпо председательĕсен 6 уйăхлăх курсĕ уçăлнă.

Пирĕн республикăран унта вĕренме йама пĕр вырăн панă пулнă. Чăвашсойуз çак курсра вĕренме республикăри йалпо председательĕсенчен чи лайăх ĕçлекене, Шуршăлти (Сĕнтĕрвăрри р.) йалпо председательне Белов йулташа йанă.

Белов йулташ тăрăшса ĕçленипе Шуршăлти йалпора нихăçан та растратă пулман, таварçаврăнăш планĕсене вăл срукченех тултарса пырат.

Пирĕн календар

Н. Г. Помйаловский

Вырăссен иртнĕ ĕмĕрти паллă писательĕсенчен пĕри Николай Герасимăвич Помйаловский вилнĕренпе 75 çул тулчĕ. Вăл Петербургра 1835 çулта чухăн дйакăн çемйинче çуралнă. 8 çула çитсен ăна ашшĕ духовнăй училищăна вĕренме панă. Пулас писатĕл хăй çемйинчен нимĕнле пулăшу та илме пултарайман. Вĕренсе тухиччен вăл училищăн общежитинче питĕ те начар условисенче пурăннă. Ку общежитинче выçăлă-тутăлă пурнăç, çав тери хытлăх пуç пулса тăнă: „алхасма" йуратакан ачасене учительрен пуçласа сторожа çитийех пĕр хĕрхенӳсĕр хĕненĕ, макăртнă, тĕрлĕ майсемпе асаплантарнă. Çак майсемпе „воспитани" парса вĕсем ăчасен пуçĕнче „пăтранакан ирĕклĕ шухăшсене" путарса лартасшăн пулнă. Ку картинăсене Помйаловский хăйĕн „Очерки бурсы" йатлă произведенийĕнче питĕ те пысăк маçтăрлăхпа, чăн-чăн реалисăмла метăдпа сăнласа панă. Çак произведенинче вăл вăхăтри Российăн çамрăк ачасене „воспитани" парас ĕçри мĕнпур ирсĕр сăн-сăпатне, ачасем çине тискер кайăк куçĕпе пăхнине, вĕренекен çамрăксенчен патша влаçĕ хăраса чĕтресе тăнине, „ирĕк шухăш саракансене" кашни утăмрах патша йыттисем сăнаса тăнине уçăмлăн кăтартнă.

Талантлă писатĕл Помйаловский ачасене питĕ те йуратнă. Çĕршыв араскалĕн пуласлăхĕ çамрăксенчен, пурнăç çине тĕрĕс куçпа пăхма вĕренсе çитĕннĕ çынсенчен килессине вăл чунтан-чĕререн шаннă. Чи малтан пичетленнĕ „Вукол" йатлă очеркĕнчех (1859 ç.) писатĕл хăйĕн умне ачасен характĕрĕ мĕнле формăланса пырас ыйтăва лартат. Шкулсенче хытă тытса, хĕнесе вĕрентнипе ыра та таса кăмăллă ачасемех мĕнле йурăхсăра тухса кайнине, аманса йулнисене кăтартса парат. Помйаловский, иртнĕ ĕмĕрти паллă революционер-просветитель Добролюбăв хăварнă ĕçсемпе чĕререн килĕшнĕскер, ытти калавĕсенче те çамрăк ачасене хытă тытакан педагогсене хирĕç тухат, вĕсене питлет, вĕсен тискер кайăкла ирсĕр ĕçĕсене тăра шыв çине кăларат. Педагогикă фрончĕ вăл вăхăтра общĕствăри феодалла-крепăсла йĕркесене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте усă курмали чи кирлĕ фронт пулнă.

Помйаловский хăйĕн пĕтĕм вăйне общĕствăри çĕнĕ çынсем (демократсем, разночинцăсем) мĕнле ӳçнине литературăра тĕрĕссĕн кăтартас ĕçе панă. „Епĕ сире йуратăп,—тесе çырат вăл Чернышевский патне йанă çырăвĕнче.—Йуратăп çеç те мар, епĕ сирĕн воспитанник. Есĕр кăларакан „Современник" журнал çитĕнтерне мана, çав журнал манăн шухăша çĕнетнĕ".

Питĕ те вăхăтсăр татăлнă писатĕлĕн кунçулĕ. 29 çула çитсен вăл, 1863 çулти октябĕрĕн 17-мĕшĕнче вилнĕ. Çапла вара литературăра мĕнпурĕ те 4 çул хушши çеç ĕçленĕ. Çапах, çак 4 çул хушшинчех Помйаловский вырăс литературинче мухтавлă вырăн йышăнса йулмали паха произведенисемех парса хăварма пултарнă. Вулакансем ăна ĕлĕкхи асаплă пурнăçа пысăк маçтăрлăхпа чăнлăн кăтартса панăшăн йуратаççĕ.



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Осоавиахим Тула хула совечĕн çар-ĕç пайĕн начальникĕ Шомин й. (сулахайра) Тула савăтĕнчи стаханăвĕçсене П. И. Борисăвпа (варринче) С. С. Сергейĕва пĕчĕк калибрлă тупă çинчен ăнлантарат.

В. Дагайĕв фото-ӳкерчĕкĕ („Пресsклише").

Противогазсем тăхăнса ĕçлеççĕ

Шăхасанти почтă кантурĕнче ĕçлекенсем Пĕтĕм Сойузри химилĕ ăмăртусене хутшăнса, ПВХО значокĕн нормисене параççĕ. Халĕ 6 çын хăйсене валли противогазсем туйаннă. Осоавиахим пуçламĕш организаци пĕчĕк калибрлă винтовкă илчĕ.

Осоавиахим членĕсем противогазсем тăхăнса похода кайма тата производствăра ĕçлеме тренировкăсем тума тытăнчĕç. Октябĕрĕн 14-мĕшĕнче 25 минут хушши противогазсем тăхăнса ĕçленĕ.

А. Йегорăв.

Стена хаçачĕсен выстăвки

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствин постройкомĕ тата „Стаханăвла хăвăртлăхшăн" хаçат редакцийĕ строительствăра тухса тăракан стена хаçачĕсен выстăвкине организацилеççĕ. Выстăвкă нойабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 7-мĕшчен пымала.

Стена хаçачĕсене лайăх кăларса тăракан редактăрсене тата редколлеги членĕсене валли премисем уйăрса хунă: пĕррemĕш преми—200 тенкĕ, иккĕмĕш—150 тенкĕ, виççĕмĕш— 125 тенкĕ, тăваттăмĕш преми—100 тенкĕ.

А. Смышлйайĕв.

Тумтирсене хывса тăхăнмали çурт

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Нумай пулмаст „Большевик" савăтри рабочисем валли тумтирсем хывса тăхăнмали çурт тума тытăнчĕç. Çурта кирпĕчрен, икĕ хутла тăваççĕ.

Çак çуртра нумай пӳлĕмсем пулаççĕ. Вăл пӳлĕмсенче рабочисем ĕçе кĕрес умĕн хăйсен тумтирĕсене хывса производствăра ĕçлемели тумтирсем тăхăнаççĕ, ĕçрен тухнă хыççăн та хăйсен тумтирĕсене тăхăнса килĕсене таса тумтирсемпе саланаççĕ.

Тумтирсене хывса тăхăнмали пулĕмсемсĕр пуçне çуртра столовăй, душ, медицинă пункчĕ, парикмахĕрски тата тумтирсене типĕтмели пӳлĕмсем пулаççĕ.

Халĕ çурта тăвас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пырат.

Н. Иваницкий.

Тутар республикинчи трактăриссем малта пыраççĕ

Тутар республикинчи трактăриссем трактăрсемпе усă курас йенĕпе тăваттăмĕш çул ĕнтĕ малта пыраççĕ. Октябĕр уйăхĕ пуçланнă тĕле 15 лаша вăйлĕ пĕр трактăрпа ĕçлесси республикă тăрăх вăтамран 566 гектара çитнĕ. Сойузĕпе вăл—349 гектар.

Актаныш МТ Станцийĕ республикăра чи малта пырат. МТС-чи Хафизăв й. бригади кашни СТЗ трактăрпа 1.624 гектар, Генейĕв бригади—1.924 гектар ĕçленĕ.

МТС-чи хĕрарăмсен бригадисем те лайăх ĕçлеççĕ. Акă, Галисинă йулташ бригади пĕр трактăрпа вăтамран 1.250 гектара çити, Калимăвă йулташ бригади—1.104 гектара çити; Фасховă йулташ бригади 1.004 гектара çити ĕçленĕ.

Çак йулашки тăвата çул хушшинче Тутар республикинче трактăрсен йышĕ икĕ хут ӳснĕ. Кăçал республикă уй-хирĕсенче 4.675 трактăр ĕçленĕ, вăл шутран 118 трактăр—дизельмоторлисем.

(ТАСС).

Мотоцикл туйанчĕ

Ишлей МТС-чи трактăр бригадин бригадирĕ Михейĕв йулташ кăçалхипе иккĕмĕш çул бригадирта ĕçлет. Вăл чи паллă трактăриссенчен пĕри шутланат.

Ĕçе стаханăвла туса пынипе Михейĕв й. кăçал нумай укçа ĕçлесе илчĕ. Нумай пулмаст вăл 3360 тенкĕ парса хăйне валли мотоциклет туйанчĕ.

М. Галкинă.

Пĕлтерни

Октябĕрĕн 19-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Академи театрĕн çуртĕнче хулари партактивĕн пухăвĕ пулат. Партактив валли пухăва кĕмели пропуска çекретарсемпе парторгсем ПСК(б)П хула комитетĕнче илеççĕ.

КУН ЙĔРКИ:

1. ПСК(б)П Чăваш организацин облăçри XIX-мĕш конференци итогĕсем — докладчик А. А. Волкăв й.

ПСК(б)П хула комитечĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ÇЫХĂНУ УПРАВЛЕНИНЕ
РАДИОТЕХНИКСЕМ, НАДСМОТРЩИКСЕМ, РАДИСТСЕМ, МОТОРИСТСЕМ тата опытлă машинисткăсем
васкавлă кирлĕ.
2—1

КАНАШ—ШУПАШКАР
Чукунçул строительствин Управленийĕ
чукунçулпа вăхăтлăх усă курнă вăхăтра
план тата тариф тума Чăваш республикинчи мĕн пур учрежденисенчен, предприйатисенчен тата хуçалăх организацисенчен Канаш—Шупашкар чукунçулĕ тăрăх 1938 çулти IV-ш квартăлта тата 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшпе майăн пĕррemĕш хушшинче, грузсем турттармали çинчен уйăхсем тата квартăлсем тăрăх кăтартса, кăçалхи октябĕрĕн 25-мĕшĕнчен кайа мар зайавкăсем пама ыйтат.
Чукунçул строительствин Управленийĕ.
2—1

„Союзутиль"
6×7 метр виçелĕ
икĕ çĕнĕ пура сутат.
Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: гор, Чебоксары, ул. Ленина, 3, „Союзутиль".
2—1

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Племзаготкантурне
йалан ĕçлеме
АСЛĂ БУХГАЛТĔР
кирлĕ.
Ĕç укçи килĕшӳ тăрăх.
Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле:
Г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, № 7, Чувашплемзаготконтора НКЗ ЧАССР. Телефон № 7—71.
2—1

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне
квалификацилĕ машинисткă
ТАТА
завхоз кирлĕ.
2—2

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус. 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., ÇУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ, ПИÇМОНОÇЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномочный Чувашглавлита № 542. Гор. Чебоксары, типографин № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф. 6. 58×84 п. л.